БИБЛИОТЕКА им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Сентябрь 2 юнкун № 172 (9081) 36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Шкулсенче вĕрентÿпе воспитани ĕçне малалла лайăхлатассишĕн. РСФСР Çутĕç министрĕпе И. А. Каировпа калаçни (1 стр.).
Наука дворецĕ — Совет халăхĕн мухтавĕ. Проект авторĕпе — СССР Архитектура академийĕн действительнăй членĕпе Л. В. Рудневпа калаçни (1 стр.).
Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн пленумĕ (2 стр.).
Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн пленумĕ йышăннă резолюци (2 стр.).
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче (3 стр.).
МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕН ĔÇ ОПЫТĔНЧЕН. И. Васильев. — Обществăлла хуçалăха пур енĕпе те аталантарассишĕн (3 стр.).
Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ (3 стр.).
В. Харьков. — Демократиллĕ Вьетнам Республики сакăр çул тултарчĕ (4 стр.).
Албанипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин виççĕмĕш съезчĕ (4 стр.).
КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ. Г. Краснов. — Лайăх парне (4 стр.).

Совет учрежденийĕсенчи ĕç кунĕн йĕрки çинчен

Совет çĕршывĕнче государство аппарачĕ коммунизм строительствинчи аслă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тăвать. Совет государствин аппарачĕ — тĕнчери чи демократиллĕ, чăннипех халăхшăн ĕçлекен управлени аппарачĕ. Унăн вăйĕ ĕççыннисен анлă массисемпе тачă çыхăнса тăнинче, массăсен хастарлăхĕ çине таянса ĕçленинче, унăн кадрĕсем Коммунистсен партийĕ туса хатĕрленĕ, халăхăн тĕп интересĕсене палăртса тăракан политикăна пурнăçласа пынинче.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви государство аппаратне çирĕплетессишĕн, унăн ĕç меслечĕсене лайăхлатассишĕн куллен-кун тăрăшаççĕ, совет учрежденийĕсем яланах умра тăракан задачăсене тивĕçлипе пурнăçласа пычччăр, аппаратăн пур сыпăкĕсем те тĕрĕс, оперативлă ĕçлечччĕр, государство аппарачĕн работникĕсем хамăр халăхшăн тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе пычччăр, тесе ыйтаççĕ.

Совет государствин никĕсне хывнă аслă Ленин 1921 çулта центрти совет учрежденийĕн руководителĕсем патне çапла çырнă: «Совет администрацийĕн машини вăхăтра, тĕрĕс, хăвăрт ĕçлени кирлĕ. Вăл япăх ĕçлесен, уйрăм çынсен интересĕсене сиен пулнисĕр пуçне, пĕтĕм управлени ĕçĕ тĕрĕс мар пулса пырать... Сирĕн пата янă ĕçсемпе ыйтусем пирки малашне хăвăрт тата тĕплĕ ответсем пама хушатăп. Ниме пĕлтермен хутсем çырнипе е урăх учрежденисене ярса панипе лăпланни волокитăна йышлăлатни, хута сая яни кăна пулать».

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех Ленин совет учрежденийĕсенчи работниксенчен нумай ыйтнă. Вăл калани хальхи кунсенче те пĕтĕмпех вырăнлă. Халĕ ĕнтĕ Совет государство аппарачĕн социализм строительствинчи пысăк опыт пур, унта парти пăхса ÿстернĕ пысăк квалификациллĕ, коммунизм ĕçне чунтан-чĕререн парăннă, партипе правительство панă кăтартусене ăнăçлă пурнăçлама пултаракан кадрсем ĕçлеççĕ. Анчах çапах та совет аппарачĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха.

Ĕç кунĕн йĕркине пăсни центрти тата вырăнсенчи нумай совет учрежденийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри пулать. Ĕç кунĕн йĕркине пăсни совет учрежденийĕсен аппарачĕн пĕтĕм ĕçне чăрмантарать.

СССР Министрĕсен Совечĕ çак кунсенче министерствăсенчи, ведомствăсенчи тата ытти совет учрежденийĕсенчи ĕç кунĕн йĕрки çинчен йышăннă постановленире аппарат ĕçĕнчи тĕрĕс мар практикăна хытă критикленĕ. Аппарат тĕрĕс мар ĕçленĕ пирки ĕç кунĕн йĕрки çинчен кăларнă закона пăсаççĕ. Çакна палăртнă: министерствăсен, ведомствăсен тата ытти учрежденисен руководителĕсем час-часах 2—3 сехет кая юлса ĕçлеме пуçлаççĕ, вара ĕç кунĕ çĕрле тин пĕтет, кирлĕ мар çĕртенех сотрудниксене ĕçрен вăхăтра ямаççĕ, вăхăт иртсен службăна чĕнсе илеççĕ. Ĕç вăхăтне çавăн пек тĕрĕс мар йĕркеленĕ пирки тата руководительсем хăйсем ĕç кунĕн йĕркине пăснă пирки нумай министерствăсемпе ведомствăсенче аппарат ĕçне çителĕклĕ тĕрĕслесе тăни çук, служащисем хушшинче ĕç дисциплини япăхса кайнă.

Нумай фактсем кăтартса панă тăрăх, тĕрĕс мар йĕркепе ĕçленĕ çĕрте производство планĕсемпе заданисене пурнăçлас ĕçре кая юлса пыни пуринчен ытла палăрать, предприятисене ертсе пырас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ.

Илес, сăмахран, Вăрманпа хут промышленность министерствине. Çиелтен пăхсан, унăн руководителĕсем питĕ нумай тата тăрăшса, вăя шеллемесĕр, вăхăта хĕрхенмесĕр ĕçленĕ пек курăнать. Чăннипе вара вĕсен ĕçне, вĕсен айăпне пула çак министерствăн пысăк аппарачĕн ĕçне те япăх организациленĕ. Министерство руководителĕсемшĕн çакă йăлана кĕнĕ — вĕсем 2—3 сехет кая юлса ĕçе тытăнаççĕ, темиçе сехет ĕçленĕ хыççăнах апат çиме нумай вăхăтлăха перерыв тăваççĕ, унтан вара çĕрле пулсан вĕçĕмсĕр ларусем иртереççĕ.

Министерство руководителĕсен ĕçĕнчи çакăн пек йĕрке (тĕрĕсрех каласан, йĕркесĕрлĕх!) аппаратăн пĕтĕм ĕçне питĕ чăрмантарать. Министерствăн пайĕсемпе главксенчи сотрудниксем, ĕçпе пыракан нумай çынсем министр, унăн заместителĕсем, коллеги членĕсем тата главксен начальникĕсен татса памалли ыйтусене ĕç кунĕн малтанхи пайĕнче татса параймаççĕ, мĕншĕн тесен аппарат руководителĕсем ирхи сехетсенче министерствăра пулмаççĕ. Çакă аппарат ĕçĕн организацине пăсать, сотрудниксен дисциплинине хавшатать. Вара ирĕксĕрех вĕсем те ĕç кунне васкамасăр пуçлама хăнăхаççĕ. Ĕç кунĕн иккĕмĕш пайĕнче (ăна министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсем хăйсен ирĕкĕпе çĕрлехи вăхăта куçараççĕ) аппарат сотрудникĕсем васкаса, штурмовщина йĕркипе ĕçлеççĕ. Начальниксен кабинечĕсем умĕнче час-часах сотрудниксемпе ĕçпе пынă çынсем черетре тăраççĕ, вĕсем хăвăрт тумалли ĕçсем тăрăх решенисем кĕтеççĕ.

Министерство коллегийĕн ларăвĕсене çĕрлехи вăхăтра иртерни те ĕçре тĕрĕс мар йĕрке пулнине кăтартса тăрать. Çавăн пек условисенче иртерекен коллеги ларăвĕсем усă сахал параççĕ, хăшпĕр чухне пушă халлап яни кăна пулса тăраççĕ.

Кун пек çитменлĕхсем Тинĕспе юханшыв флочĕн министерствин, ытти нумай министерствăсен, ведомствăсен тата учрежденисен ĕçĕнче те пур. Учрежденисен ĕç кунĕн йĕркине пăсни ĕçре пысăк сиен кÿрет, ăна пула волокитăпа бюрократизм пулать, питĕ кирлĕ васкавлă ыйтусене татса парасси чарăнса тăрать. Кун пек çитменлĕхсем парти аппаратĕнче те çаралнă, çавна тÿссе тăма май çук.

Государство аппарачĕн ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешсе, партипе правительство совет учрежденийĕсенчи кадрсемшĕн, пĕтĕм халăхпа пĕрле хамăрăн социализмла Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр кĕрешекен кадрсемшĕн, ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Ĕç вăхăтне тĕрĕс мар организацилесен, учреждени руководителĕсем ĕç кунĕн йĕркине пăссан аппарат сотрудникĕсем культурăпа политика енĕпе ÿссе пыма, ĕç квалификацине ÿстерме кирлĕ вăхăтпа усă кураймаççĕ, çавăн пекех тата çемье çине, ачасене воспитани парас ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхаймаççĕ. Çакă та паллă: çĕрлехи вăхăтра ĕçлени работниксен сывлăхне хавшатать, вĕсен ĕç пултарулăхне чакарать. Çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене партипе правительство татăклăн сивлеççĕ, ун пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес пулать.

Министерствăсенче, ведомствăсенче тата ытти совет учрежденийĕсенче ĕç йĕркине тĕрĕс туса хурас тата ĕç дисциплинине çирĕплетес тесе, правительство йышăннă постановлени тăрăх, ĕç кунĕн çирĕп йĕрки пулать.

1953 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Мускав хулинче вырнаçнă, союзшăн тата республикăшăн ĕçлесе тăракан учрежденисемпе организацисенче ĕç кунĕ ирхине 9 сехетре пуçланать, каçхине 6 сехетре пĕтет, кăнтăрлахи апат валли пĕр сехет перерыв пулать. Мускаври вырăнти учрежденисемпе организацисенче ĕç кунĕ ирхине 10 сехетре пуçланать, каçхине 7 сехетре пĕтет, кăнтăрлахи апат валли пĕр сехет перерыв пулать.

Правительство министерствăсенчи, ведомствăсенчи тата ытти совет учрежденийĕсенчи ĕç кунĕн йĕрки çинчен йышăннă постановлени государствăшăн пысăк вырăнта тăрать. Çак решение пурнăçлани государство аппарачĕн ĕçне чылай лайăхлатма, ăна лайăхрах ĕçлекен тума пулăшĕ. Правительство тăвакан çак ĕç совет çыннисемшĕн, государство аппаратĕнчи работниксемшĕн тăрăшни пулать. Ĕç кунĕн çирĕп йĕркине туса хунă хыççăн совет аппаратĕнчи йышлă кадрĕсемшĕн лайăхрах условисем пулса тăраççĕ: вĕсен культурăпа политика тĕлĕшĕнчен ÿссе пыма, ĕç квалификацине ÿстерме вăхăт çителĕклĕ пулать. Кунпа пĕрлех государство аппаратĕнчи работниксем çемье çине, ачасене воспитани парасси çине ытларах çаврăнса пăхма пултараççĕ.

Министерствăсен, ведомствăсен, пĕтĕм совет учрежденийĕсен руководителĕсем умĕнче, партин вырăнсенчи организацийĕсем умĕнче çакăн пек задача тăрать: государство туса иртерекен çак ĕçе çине тăрса пурнăçламалла, совет аппарачĕн пур сыпăкĕсенче те государство дисциплинине çирĕплетмелле, совет служащийĕсен ĕç культурине ÿстерсе пымалла. Ĕç кунĕнчи кашни сехетпе, кашни минутпа усă курса государство умĕнчи тивĕçе пурнăçласа пырасси — совет аппаратĕнчи кашни работникшĕн чыслă ĕç. Бюрократизмпа волокита пулнине хирĕç татăклăн кĕрешмелле, решенисемпе хушусене пурнăçланине тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла, самокритикăна тата уйрăмах аялтан килекен критикăна пур майсемпе те сарса пымалла.

Министрсен, ведомствăсемпе ытти учрежденисен руководителĕсен ĕç кунĕн йĕркине çирĕппĕн пăхăнмалла, ĕç вăхăчĕ иртнĕ хыççăн сотрудниксене ĕçе чĕнсе илме, учрежденисемпе организацисенче ĕç кунне вăрăмлатма татăклăн чармалла. Ĕç кунĕ иртнĕ хыççăн ĕçлемеллех пулсан, сотрудниксене (ĕç кунĕ нормăллă пулсан) закон тăрăх хушса тÿлемелле, анчах ĕç укçин фончĕнчен ытлашши укçа пĕтермелле мар.

Министрсен тата центрти учрежденисен руководителĕсен, правительство ĕç кунĕн йĕрки çинчен кăтартса панине асра тытса, учрежденисенчи шалти йĕрке çинчен калакан правилăсене кирлĕ пек улăштармалла. Союзлă республикăсен министрсен совечĕсене республикăсенчи тата вырăнсенчи учрежденисенчи ĕç кунĕн йĕркине туса хума хушнă.

Правительство совет учрежденийĕсенчи ĕç кунĕн йĕрки çинчен йышăннă решени государство аппаратне тата ытларах çирĕплетме, коммунизм строительствинчи задачăсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре государство аппарачĕн рольне ÿстерме пулăшать.

(«ПРАВДА» хаçатăн 1953 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчи умстатьинчен).

Шкулсенче вĕрентÿпе воспитани ĕçне малалла лайăхлатассишĕн

РСФСР Çутĕç министрĕпе И. А. Каировпа калаçни

Пионерсемпе шкул ачисен каникулĕ вĕçленчĕ. Çу кунĕсенче миллионшар ачасем лайăх канчĕç, ÿт-пĕве тĕреклетрĕç. Çул çÿреме юрататан çĕрщер пин çамрăксем Тăван çĕршыв тăрăх экскурсисене çÿрерĕç. Вуншар пин çамрăк спортсменсем тĕрлĕ походсене хутшăнчĕç, хуласенче, облаçсенче, крайсенче, республикăсенче çăмăл атлетика, авиамодель, велосипед, мотоцикл тата ытти спорт енĕпе пулса иртнĕ ăмăртусене хутшăнчĕç.

Сентябрĕн 1-мĕшĕ — çĕнĕ вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕ. Парти, совет, комсомол тата обществăлла организацисем пулăшнипе Россия Федерацийĕнчи çутĕç работникĕсем шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне вăхăтра хатĕрлесе çитерес, интернатсене ачасене йышăнма хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Партипе Совет Правительстви халăх ырлăхĕшĕн, совет çыннисен культурине ÿстерессишĕн, халăха вĕрентес ĕçе аталантарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Пирĕн çĕршывра вĕренесси халăхăн чи анлă массисен тивлечĕ пулса тăчĕ. Ÿссе çитĕнекен ăрушăн тăрăшасси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Тĕслĕхрен, РСФСР Государство бюджечĕ тăрăх РСФСР Çутĕç министерствин учрежденийĕсемпе ĕçĕсем валли кăçал 17.856 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Çакă вăл республика бюджетĕнче 30 процента яхăн пулать.

Пирĕн çĕршывра пурне те çичĕ çул вĕрентес ĕçе пурнăçласа çитернĕ. Халĕ пурне те вăтам пĕлÿ парас задачăна пурнăçлама тытăннă. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, çутĕç органĕсем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле Россия Федерацийĕнчи 120 хулара — автономиллĕ республикăсен столицисенче, облаçсен, крайсен центрĕсенче, пысăк промышленность центрĕсенче пурне те вунă çул вĕрентме пуçлама мĕн кирлине туса хатĕрленĕ.

Кăçал шкул çурчĕсем пин ытла туса лартаççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче РСФСР-ти хуласемпе ялсенче çĕнĕрен 1.119 вăтам шкул уçăлать. 8—10-мĕш классенче 2.424 пин ача вĕренмелле пулать. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 689 пин çын ытларах шутланать.

Педагогсен йышĕ пĕрмаях ÿссе пырать. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле РСФСР-ти хуласемпе ялсенчи шкулсене педагогика училищисенчен, педагогика институчĕсемпе учительски институчĕсенчен вĕренсе тухнă 62 пин ытла çамрăк учительсене ĕçлеме янă. Хальхи вăхăтра республикăра 800 пине яхăн учитель шутланать.

Су кунĕсенче нумай учительсем квалификацие хăпартмалли курссенче вĕренчĕç. Учительсен августри канашлăвĕсенче çутĕç работникĕсем иртнĕ çулта тунă ĕçсене пăхса тухрĕç, 1953—1954 вĕренÿ çулĕнче тумалли ĕçсене палăртрĕç.

Кăçал издательствăсемпе полиграфи промышленность работникĕсем лайăх ĕçлерĕç. РСФСР Çутĕç министерствин учебниксемпе педагогика литератури пичетлесе кăларакан издательстви, срокчен пичетлесе кăларса, вырăнсене вырăс чĕлхи, литература, истори, физика, хими, математика, биологи, черчени, географи тата ытти дисциплинăсем тăрăх 130 миллион учебник ярса пачĕ. Çак учебниксене вăтам, çичĕ çул вĕренмелли тата пуçламăш шкулсем кăна мар, рабочи çамрăкĕсен 3 пине яхăн шкулĕ, ялти çамрăксен шкулĕсемпе харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен классен 6 пин ытла шкулĕ туянаççĕ. Ку шкулсенче, предприятисенче, колхозсенче, совхозсенче, учрежденисенче, машина-трактор станцисенче ĕçлекен çамрăк арçын ачасемпе хĕрачасем 860 пин çын ытла вĕренессĕ.

Совет Союзĕ — вĕренес ĕç халăхăн чи анлă сийĕсен тивлечĕ пулса тăнă тĕнчери пĕрремĕш çĕршыв. Кунта пур халăхсен ачисем те хăйсен тăван чĕлхипе вĕренессĕ. Шкулсенче Совет Союзĕнчи 100 ытла халăх чĕлхипе вĕрентессĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе, РСФСР Çутĕç министерстви Педагогика наукин академийĕпе пĕрле тата малта пыракан учительсем хутшăннипе шкулсенчи вĕренÿ планне, программăсемпе учебниксене лайăхлатмалли ĕçсем туса хатĕрлерĕ. Вĕренмелли ытлашши нумай материалсене чакарасси çине, вĕрентÿ материалне ачасен çулне кура ăнланмалла тăвасси çине уйрăмах тимлĕн пăхнă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панă задачăсене пурнăçласа, шкулсенче вĕрентекен преподавательсем иртнĕ çултах политехникăлла вĕрентĕве пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем пуçарчĕç. Ку ĕç Мускавра, Ленинградра, Свердловскра, Ярославльте, Горькире, Алтай крайĕнче, Мускав, Свердловск облаçĕсенче тата ытти облаçсенче те ăнăçлă пулса пынă.

РСФСР Çутĕç министерстви шкулсене политехникăлла вĕрентÿ ыйтăвĕ тăрăх чылай кăтартусем пачĕ. Политехникăлла вĕрентÿ предметсене вĕрентнĕ чухне, чи малтан, физика, химия, геологи, географи, математика, черчени предмечĕсене вĕрентнĕ чухне пурнăçланса пымалла.

1953—1954 вĕренÿ çулĕнче шкул çулне çитнĕ çамрăксене пурне те вĕренме илмелле. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ шкулсенче вĕрентÿпе воспитани ĕçне малалла лайăхлатмалли, вĕренекенсен пĕлĕвне ÿстермелли çул пулса тăмалла.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви куллен тăрăшнипе хавхаланса, çутĕç работникĕсем ÿссе çитĕнекен çамрăк ăрăва коммунизмăн культурăллă та нумай вĕреннĕ строителĕсем пулма, хамăрăн халăха, хамăрăн социализмла Тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратакан çынсем пулма вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса тата пĕтĕм пĕлĕве парса ĕçлĕç. (ТАСС).

Райисполкомсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçланăшăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ çак колхозсемпе совхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртме йышăннă:

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

22. «Комбинат» колхоз (председателĕ И. Г. Моисеев юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. Г. Иванов юлташ).
23. «Труд» колхоз (председателĕ Ф. П. Зайцев юлташ, парторганизаци секретарĕ И. М. Трофимов юлташ).

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ

24. «Правда» колхоз (председателĕ В. Т. Тимофеев юлташ, парторганизаци секретарĕ А. Р. Мишуткин юлташ).

СĔНТĔР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

25. «Броневик» колхоз (председателĕ П. П. Сурский юлташ, парторганизаци секретарĕ П. С. Толстов юлташ).

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

26. «Парижская коммуна» колхоз (председателĕ Н. А. Чурмеев юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. М. Евраськов юлташ).

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ ГОСУДАРСТВАНА ТЫРА ПАМАЛЛИ ТАТА ВĂРЛĂХ ФОНЧĔ ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тыра памалли плана тултарнă	Вăрлăх фончĕ хывнă
Шупашкар	107	42
Ишлей	104	55
Муркаш	100	40
Шăхасан	99	53
Етĕрне	97	81
Тăвай	93	48
Канаш	88	44
Елчĕк	88	74
Чурачăк	86	65
Пăрачкав	85	47
Калинино	78	32
Чкаловски	77	64
Вăрмар	77	37
Красноармейски	76	43
Улатăр	76	77
Комсомольски	75	52
Куславкка	75	28
Кувакино	74	65
Шăмăршă	74	53
Çĕрпÿ	74	35
Сĕнтĕрвăрри	72	31
Сĕнтĕр	72	55
Йĕпреç	72	55
Октябрьски	67	40
Элĕк	67	40
Хĕрлĕ Чутай	67	38
Вăрнар	67	50
Советски	66	33
Первомайски	62	71
Çĕмĕрле	62	37

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Тырпул пухса кĕртнĕ	Комбайнсемпе вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă
Чурачăк	100	81	98	53
Комсомольски	100	62	83	55
Советски	100	57	90	43
Красноармейски	100	62	90	47
Муркаш	99	87	93	52
Чкаловски	99	67	78	57
Первомайски	99	61	96	63
Вăрмар	99	76	88	47
Вăрнар	99	73	92	56
Етĕрне	99	86	100	71
Елчĕк	99	78	96	59
Элĕк	98	65	90	45
Тăвай	98	63	63	49
Калинино	98	79	90	46
Шăхасан	98	64	95	54
Йĕпреç	97	100	84	64
Ишлей	97	74	74	49
Шупашкар	97	68	76	49
Канаш	97	106	82	51
Сĕнтĕр	97	66	85	53
Çĕрпÿ	96	75	78	51
Кувакино	96	89	96	92
Октябрьски	96	78	72	42
Çĕмĕрле	93	82	99	64
Шăмăршă	93	77	90	59
Куславкка	92	70	60	45
Сĕнтĕрвăрри	92	59	64	43
Хĕрлĕ Чутай	92	112	98	53
Улатăр	90	89	81	82
Пăрачкав	90	88	70	82

Наука дворецĕ — совет халăхĕн мухтавĕ

Проект авторĕпе — СССР Архитектура академийĕн действительнăй членĕпе Л. В. Рудневпа калаçни

Сентябрĕн пĕрремĕшĕ — совет çамрăкĕсен пурнăçĕнчи савăнăçлă кун. Çĕршыври мĕнпур аслă шкулсенче занятисем пуçланаççĕ. СССР Министрĕсен Совечĕ çак кун Ленинские горы ятлă вырăнта туса лартнă Мускаври Государство Университечĕн çĕнĕ çурчĕсене уçма йышăннă. Пиншер çамрăк арçын ачасемпе хĕрачасем Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин ирĕкĕпе туса лартнă чаплă наука дворецне пирвайхи хут пырса кĕреççĕ. Вĕсем чаплă йĕркелесе тунă аудиторисене, научнăй лабораторисене, тĕрлĕ кабинетсене пырса тулаççĕ. Кафедрăсем умне профессорсем, преподавательсем тухаççĕ, пуçламăш лекцисем вуласа параççĕ.

Университетăн çĕнĕ çурчĕ хăйĕн пысăкăшĕпе тата мăнаçлăхĕпе тĕлĕнтерет. Ку вăл тĕнчери чи пысăк аслă шкул.

Наука дворецне пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм совет халăхĕ тунă. Çак пысăк çуртăн проектне хатĕрлес тĕлĕшпе архитекторсемпе инженерсен пысăк коллективĕ ĕçленĕ. Пĕтĕмпе 50 пин листа ытла тĕрлĕ проектсен чертежĕсене тунă, вĕсене вара пĕр миллион экземпляр таран нумайлатнă. Проектсем тунă вăхăтрах архитекторсемпе инженерсем строительство мĕнле пынине ялан тĕрĕслесе тăнă.

Ленинские горы ятлă вырăнти çĕнĕ çурт — ахаль пысăк çурт кăна мар, вăл 320 гектар çĕр лаптăкĕ çине вырнаçнă 27 тĕп çурта тата ытти 10 çурта пĕрлештерсе тăракан архитектурăлла питĕ пысăк ансамбль пулса тăрать. Çак çуртсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 2 миллион та 600 пин кубометр. Çĕнĕ ансамбль хăйĕн пысăкăшĕ тĕлĕшĕнчен кăна мар тата архитектура формисем нумай енлĕ пулнипе те, шалтан лайăх илемлетнипе те чаплă. Кунта çамрăксене вĕренме, хăйсен творчествăлла пултарулăхне палăртма, культурăпа ÿт-пĕве аталантарма питĕ лайăх условисем туса панă.

Пысăк корпусăн 32 хутлă çурчĕн тĕп пайĕ чĕрĕк километр çÿлĕшне яхăн çĕкленсе тăрать. Вăл ытăн шпильпе тата пилĕк кĕтеслĕ çăлтăрпа вĕçленет. Вăл пĕтĕм архитектура комплексĕн композицилле центрĕ пулса тăрать.

Çак çурт патне пырса кĕме гранитран сарлака пусма тунă. Унăн икĕ айккипе арçын ачапа хĕрача сăнне кăтартакан бронзăран тунă пысăк скульптурăсем вырнаçтарса лартнă. Çак скульптурăсен теми — «Çутçанталăка улăштарса çĕнетекен çамрăксем». Гранитран тунă пысăк портик çийĕнче 20 метр çÿлĕш скульптурăлла барельеф. Вăл «СССР халăхĕсен туслăхне» кăтартать. Портик çийĕнче, ялавсен фони çинче Ленин орденĕ. Университета çак орденпа наградăланă ĕнтĕ.

Çуртăн çÿлĕ пайне актовăй зал вырнаçнă. Унта 1.500 çын вырнаçма пултарать. Çуртăн çав пайĕнчех çĕрĕç музейĕ, 800 çын вырнаçмалăх клуб, университет ректорачĕ, географи, геологи, механикăпа математика факультечĕсем, 400 ытла вĕрентÿпе научнăй лабораторисем. Вĕсене наукăпа техникăн мĕнпур отраслĕсенчи çĕнĕ приборсемпе пуянлатнă.

Акă мĕнле курăнать географи факультечĕн пĕр хучĕ. Кунта 18 лаборатори тата кабинетсем, 250 çын вырнаçмалăх факультет аудиторийĕ, вуламалли залсем 4, каталогсен пÿлĕмĕ. Лабораторисенче опытсем ирттерме мĕн кирли пурте пур: хĕснĕ сывлăш, газ, вĕри тата сивĕ шыв, тĕрлĕ инвентарьсем.

Çуртăн вестибюлĕсемпе парадлăйĕсене илемлетме гранитпа, тĕрлĕ тĕслĕ мраморпа, мозаикăпа, бронзăпа хаклă йышши йывăççемпе усă курнă. Стенасемпе мачасене картинăсемпе, тĕрлĕ ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ. Çуртăн çÿлĕ пайĕнче 20 лифт ĕçлет. Вĕсем секундăра 3,5 метр хăвăртлăхпа çÿреççĕ. Университетăн мĕнпур корпусĕсенче çынсене ларса çÿремелли тата грузсем çĕклемелли 100 ытла лифт ĕçлет.

Нумай хутлă тĕп çуртăн икĕ айккипе хăватлă çунат пек 18, 12, 9 хутлă корпуссем вырнаçнă. Вĕсенче студентсемпе аспирантсем валли 5.754 пÿлĕм тата профессорсемпе преподавательсем валли 184 хваттер. Вĕсенче пурăнмалли лаптăк 64 пин тăваткал метр.

Студентсемпе аспирантсем валли тунă пÿлĕмсенче пурăнма питĕ лайăх. Кашни пÿлĕмре кĕнекесен шкапĕ, çырмалли тата апатланмалли сĕтелсем, комбинированнăй кровать — диван, радио, телефон, лампа. Çуртăн кашни хутĕнче гостинийĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсенче сĕтел-пукансем, ковёрсем, картинăсем, пианино. Кунта — вуламалли залсем, буфетсем. Ятарласа тунă пультсем студента телефон патне чĕнсе илме е ăна вестибюльре мĕн кĕтни çинчен пĕлтерме май параççĕ.

Тĕп çурт хыçĕнче 6 хутлă икĕ пысăк корпус туса лартнă. Кунта физикăпа химии факультечĕсем вырнаçнă. Çак корпуссен çурчĕсем тĕп çурт пекех илемлĕ. Лабораторисемпе кабинетсене пурне те çĕнĕ приборсемпе тата установкăсемпе пуянлатнă.

Çак корпуссемпе юнашар биологипе çĕрĕç факультечĕн, обсерватори, механика институчĕн, метеорологи станцийĕн çурчĕсем тата ытти нумай çуртсем туса лартнă. Çуртсем нумай пулсан та тата вĕсем пысăк пулсан та уйăрса панă çĕр лаптăкĕ çине ирĕклĕн вырнаçнă.

Наука дворецĕн территорийĕнче паркĕсем, скверсем, бульварсем тунă. Вĕсем 100 гектар йышăнаççĕ. Кунта агроботаника сачĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл биологипе çĕрĕç факультечĕпе юнашар вырнаçнă. Садра экспериментальнăй теплица тата искусственнăй çанталăк лабораторийĕ вырнаçнă. Вăл наукăпа тĕпчев ĕçĕсем ирттерме тата студентсен практикăлла занятийĕсене ирттерме чаплă никĕс пулса тăрать.

Уйрăмах тĕп корпус умне вырнаçнă çимĕç партер питĕ илемлĕ. Вăл 40 гектара яхăн лаптăк йышăнать. Кунта кĕмĕл тĕслĕ чăрăшсем, Çĕпĕр лиственницисем, каштансем, тутлă шăршлă топольсем илсе килсе лартнă, чечексем лартса клумбăсемпе газонсем тунă, фонтансем ĕçлеççĕ, декоративлă вазăсем вырнаçтарса лартнă. Анлă аллея тăрăх вырăссен аслă ученăйĕсен бюсчĕсене — Ломоносов, Лобачевский, Чебышев, Докучаев, Менделеев, Попов, Тимирязев, Мичурин, Жуковский, Павлов, Герцен, Чернышевский бюсчĕсене вырнаçтарса тухнă.

Университетăн тĕп çурчĕ наука дворецĕ кăна мар тата искусство дворецĕ те пулса тăрать. Унăн çуртне скульптурăсемпе, живопись произведенийĕсемпе пуян илемлетнĕ. Картинăсем, скульптурăсем, сĕтел-пукансем, çутатмалли приборсем — пурне те пĕр тĕллевпе, тулли стильпе йĕркеленĕ. Архитектурăпа искусство произведенийĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăни совет çыннисен мирлĕ ĕçне палăртса тăрать, пирĕн аслă Тăван çĕршывăн пуян çутçанталăкне кăтартса тăрать.

Ленинские горы ятлă вырăнта туса лартнă наука дворецĕ совет халăхĕн мухтавĕ. Ăна туса лартни Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви пирĕн çамрăксемшĕн, малта пыракан совет наукине малалла чечеклентерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине уççăн кăтартса пани пулать. (ТАСС).

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗн пленумӗ

Августӑн 31-мӗшӗнче Мускавра, Союзсен Сурчӗн Октябрьски залӗнче, мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗн анлӑ пленумӗ пулса иртнӗ. Пленум ӗçне хутшӑнма столицӑна республикӑсенчи, крайсенчи тата облаçсенчи мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комитетсен представителӗсем пухӑннӑ. Пленумра профсоюзсен, ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн, фашизма хирӗç кӗрешекен совет хӗрарӑмӗсен комитечӗн, фашизма хирӗç кӗрешекен совет çамрӑкӗсен комитечӗн тата ытти общество организацисен представителӗсем пулнӑ. Пленума наукӑпа культура деятелӗсем, промышленноçра тата ялхуçалӑхӗнче ӗçлекен паллӑ çынсем, совет халӑхӗн миршӗн пыракан кӗрешӗвне активлӑ хутшӑнакансем пухӑннӑ.

Кӗске сӑмах каласа, пленума И. Эренбург писатель уçать. Вӑл çапла калать: Совет Союзӗнчи миршӗн кӗрешекенсем Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештра пулнӑ сессийӗнче йышӑннӑ питех те пысӑк решенисене пурнӑçа кӑртме мӗнле пулӑшма пултарни çинчен сӳтсе явас шутпа, мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗн президиумӗ çак пленума пухнӑ.

[illegible] Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗн итогӗсем тата ССР Союзӗнчи мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комитетсен задачисем.

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗн председателӗ Н. С. Тихонов доклад туса панӑ.

Н. С. Тихонов тунӑ доклад

Докладчик Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештра пулса иртнӗ сессийӗн итогӗсем çинчен тӗплӗн каласа парать. Çав сесси тӗнчери мӗнпур хирӗçӳсене мирлӗ майпа йӗркелессишӗн кӗрешмелли çӗнӗ майсем йӗркелесе паларткӑ тата миршӗн тӑракан çынсен юхӑмне сарма тата тӗрӗслетме пулӑшнӑ.

— Мире юратакан халӑхсен сывлӑхӗ вӑхӑтри пуласлӑхӗ çинчен тӑракан ыйту çинчен шухӑшлаканнисем кашниех çакна курасçӗ: вӑй политики, сӗмçӗррӗн ытти çӗршывсене хуçса тӑмалли политика пысӑк поражени тӳсрӗ, — тет Н. С. Тихонов. — Халӑхсем çине тӑрса, хӗрӳллӗн кӗрешсен, хӑйсем мир çӗнтерме тума пултарнине вӗсем ӑнланасçӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗ, пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса тата пысӑк хавхаланупа, тӗнчери ытуçене каласусем иртернипе йӗркелемелли çинчен декларации йышӑнчӗ. Мир Совечӗн пӗтӗм тӗнчере анлӑ сарӑлнӑ декларацийӗнче çапла каланӑ: тӗнчери тавлашуллӑ мӗнпур ыйтусене мирлӗ майпа йӗркелеме май пур, кашни халӑхӑн хӑйӗн пурнӑç йӗркине суйласа илме праве пур, кашни халӑх ытти халӑхсем ирӗккӗн суйласа илнӗ пурнӑç йӗркине хисеплеме тивӗçлӗ, çапла ӗнтӗ тӗрлӗ системӑсем мирлӗн пурӑнма пултарасси пурнӑçа кӗме пултаракан ӗç пулса тӑрать, халӑхсем хушшинчи çыхӑнусем вара пуринпе те усӑллӑ пулса тӑрасçӗ.

Тӗрлӗ системӑсем мирлӗн пурӑнмалла тени вӑл мӗнпур хирӗçӳсемпе тавлашусене каласусем иртерниçе татса памалли не пӗлтерет.

Декларацире çавӑн пекех çав каласусен тӗп задачисене тӗллевӗсене уççӑн палартнӑ. Тӗнчери хальхи вӑхӑтри лару-тӑрура тухса тӑракан конкретлӑ требованисене каласусӑм иртернипе татса памалла. Çак требованисен шутне кунçукнекки çакӑн пек питех те кирлӗ ыйтусем кӗресçӗ: Корейӑра мир тӑвасси тата халӑхсен никама пӑхӑнманлӑхне хирӗç пыракан ытти мӗнпур вӑрçӑсене чарса лартасси, Германипе Япони ыйтӑвӗсене мирлӗ тата демократиллӗ никӗс çинче татса парасси, ют çӗршывсене халӑхсен шалти ӗçсене хутшӑнма чарасси тата вӗсен территорийӗсенчи ют çӗршыв базисене пӗтересси.

Çак требованисене пурнӑçа кӗртни, тесе каланӑ декларацире, васкаса хӗçпӑшалланассине чарса лартма тата çапла майпа пурин валли те пурнӑç шайне татта ытларах ӳстерме май парать. Мӗнпур çӗршывсем хушшинче пӗртанлӑх никӗсӗ çинче, пӗр-пӗриншӗн усаллӑ тата пӗр-пӗрне хисеплес никӗс çинче экономикӑпа культура тӗлӗшӗнчен çыхӑнусем тытассине йӗркелемелле.

Державӑсем хушшинче иртермелли каласусен тӗп задачисем çавӑн пек ӗнтӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗ тӗнчери мӗнпур халӑхсене чӗнсе Воззвани йышӑнчӗ. Унта халӑхсене «хӑйсем правительствисем умне каласусем иртернипе килӗшӳ тӑвасси çинчен требовани лартма» чӗнсе каланӑ. Хирӗçӳсене мирлӗ майпа татса пама тӗлӗшпе кирек хӑш правительствӑна мирле майпа пуçару тунине те мирӗн мӗлле пулать, — тенӗ Воззвание. — Кашнӑ тӑвасине чӑрмантаракансен е тӑвса пыраракисен ӗçӗсене миреҫ наксӗрлес пулать.

Мӗнпур континентсен çинчи халӑх массисем, мӗнле партире тӑнине тата обществӑлла шухӑшсем мӗнле пулнине пӑхмасӑр, çакӑн пек тӑвасоишӗн чӗререн тӑрӑшасçӗ: хирӗçӳсене хӗçпӑшал пулӑшнипе татса парасси телех ан пултӑр.

Каласусем иртерсе килӗшессишӗн пыракан пӗтӗм тӗнчери юхӑм тӗрлӗ çӗршывсенче тӗрлӗ майпа, анлӑн сарӑлса кайрӗ.

Италири нумай хуласенче миршӗн тӑракансем демонстрацисемпе митингсенче ыйтӑва мирлӗ майпа татса пама требовани лартасçӗ.

Францире «каласусем иртерессишӗн тата миршӗн» иртернӗ нациле конференцине мӗнпур департаментсен представителӗсем тата нумай организацисен представителӗсем хутшӑннӑ. Индире хрестченсен пысӑк организацийӗсем, паллӑ деятельсем, «Индири нациле конгресс» партийӗнчен суйланнӑ нумай депутатсем тӗнчери çӗршывсем хушшинчи ыйтусене каласусем иртерсе йӗркелемелле тесен шухӑша ырлама чӗнессӗ.

Англире профсоюзсен нациле пӗрлешӗвӗсем нумайӑшӗ тата лейбористсен партийӗн ырӑнсенчи çӗршер секцийӗсем, çавӑн пекех ку организацисенче тӑман пиншер аялчансем хӑйсен шухӑшне пӗлтернӗ. Японире миршӗн, çӗршыва тепӗр хут хӗçпӑшаллантарнине хирӗç кӗрешмелли ушӑхлӑх пуçланнӑ. Австралире мире хӳтӗлес тӗлӗшпе анлӑ кампани пуçласа янӑ.

Китай Халӑх Республикинче тата халӑх демократи çӗршывӗсенче пуринче те халӑхсем каласусем иртерессишӗн пуçланнӑ кампание пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса ырласçӗ.

США-ри власра тӑракан ушкӑнсем «сивӗ вӑрçӑ» политикине тытса пырасçӗ, пӗтӗм тӗнчере авантюрӑсемпе провокацисем организацилессӗ. Апла пулин те, США-ра та агрессие хирӗç тӑрас тӗллевпе ытти çӗршывсенчи миршӗн тӑракансемпе пӗрле кӗрешме вӑй хуракан çынсем нумай.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗн решенийӗсене пӗтӗм тӗнчери демократиллӗ тӗрлӗ организацисем — Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ, Демократиллӗ çамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ, Демократиллӗ хӗрарӑмсен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ ырланӑ. Çав организацисем çӗршер миллион çынсене пӗрлештерсе тӑрассӗ.

Н. С. Тихонов çапла каланӑ: мир лагерӗ паянхи кун хӑй паллӑ çитӗнӳсем тунине палӑртма пултарать. Корейӑра перемири тунни мир ӗçӗн чӑн-чӑн аслӑ çӗнтерӗвӗ, мире юратакан пӗтӗм этемлӗхӗн кӗрешӗвӗн практикӑлла результачӗ пулса тӑрать. Çак çӗнтерӳ вӑл пӗтӗм тӗнчере миршӗн тӑракансене миршӗн тата хастарлӑрах кӗрешме хавхалантарать, вӗсем тӗнчери политикӑри тавлашуллӑ мӗнпур ыйтусене мирлӗ майпа татса пама май пуррине ӗненсе тӑнине çирӗплетет. Çавӑнпа та ӗнтӗ Корейӑра перемири туни çинчен калакан хыпар, пур çӗршывсенче те хӑвӑрт сарӑлнӑ хыпар, пур çӗрте те савӑнтарнӑ.

Инçет Хӗвелтухӑçӗнче мире хӳтӗлес ӗçре пысӑк путтӑр. Корейӑпа аслӑ Китай халӑхӗсем тунӑ çитӗнӳ пӗтӗм тӗнчери мире хӳтӗлес ӗçре пӗтӗмӗшле çитӗнӳ тума пулӑшнӑ.

Империалистсемпе вӗсен тарçисем Корейӑра малашне мирлӗ калаçусем иртерме пулса тӑнӑ лайӑх условисене пӗтерсе лартас тесе пур майсемпе те тӑрӑшасçӗ. Пурте пӗлеççӗ, Америкӑн Сеулти тарçи Ли Сын Ман сӗмсӗррӗн çапла каланӑ: эпӗ вӑрçӑ ӗçӗсене хама хӑçан май килет, çавӑн чухне пуçласа яратӑп, эпӗ перемирие йышӑнмастӑп, тенӗ.

Çакӑ вӑл кирлӗсӗр анекдот пек кӑна тухакнӑ пулӗччӗ, тенӗ Н. С. Тихонов, мӗншӗн тесен, Хӗвелтухӑçӗнче çӳремен сӑмахпа каласан, хуçи мӗн тӑвать, упӑтте те çавнах тӑвать. Анчах Ли Сын Ман хуçисем — агрессиллӗ империалистсем — кулӑшла çынсем пулма ытлашши хӑрушӑ.

Даллеспа Ли Сын Ман «пӗр-пӗрне пулӑшасси çинчен» тунӑ, США-па Кантӑр Корея республики хушшинче тунӑ договор, Корейӑри интервенцие хутшӑннӑ 16 çӗршыв декларацийӗ Корейӑпа Инçет Хӗвелтухӑçӗнче кӑна мар тата пӗтӗм тӗнчере мире сыхласа тӑрассине хӑратса тӑрасçӗ. Кӑçалхи июнӗн 17-мӗшӗнче Берлин хулин демократиллӗ секторӗнче пулнӑ провокацие Ли Сын Мана сӗмсӗр заявленисем тума хӗтӗртнӗ çав тӗттӗм вӑйсемех, тӗнчери лару-тӑрӑва начарлатма, çӗнӗ вӑрçӑсемпе агрессисем пуçарса яма сӑлтав шыракан вӑйсемех организациленӗ.

Пурте пӗлессӗ ӗнтӗ, агрессорсем Демократиллӗ Германи Республикинче те, Корейӑри пекех, путланса ларчӗç.

Н. С. Тихонов малалла çапла калать: халӑхсем тӗнчери ыйтусене мирлӗ майпа йӗркелесе ярассишӗн тӑрӑшни ӳсе пынипе пула, хӑрушлӑх саракансемпе провокаци мастерӗсен хӑшпӗр чухве мирлӗ хозунгсемпе тата мир çинчен калакан сӑмахсемпе витӗнме тивет.

Аслӑ державӑсенчи хӑшпӗр государстве деятелӗсен общественность хӗснипе каласусем çинчен калакан идейӑпа килӗшмелле пулать. Çав вӑхӑтрах вӗсем: хӗçпӑшалланассине чарса лартма, агрессиллӗ «Европа çарне» туса хурас плансене пӑрахӑçа кӑларма шухӑшламастпӑр та, тесе пӗлтерессӗ. Çак çара, вӗсен шучӗпе, Хӗвеланӑç Германие те кӗртмелле. Вӗсем Германи милитаризмне ура çине тӑратас шухӑша та пӑрахмаççӗ. Мӗн тӑвасшӑн-ха вӗсем, нумаях пулмасть Вашингтонра ларӑ иртернӗ çак çынсем? Вӗсем Германи мӗнле пулнине курасшӑн-ха? Вӗсем çакӑн пек Германи пулассине курасшӑн: власра вӗсен тарçисем тӑмалла, вӗсен кашни сӑмахне итлемелле, Германирен çӗнӗ агресси Европӑри тӗп нучахӗ туса хума, çар туса хума, хӑй вӑхӑтӗнче Гитлер Хӗвеланӑçне тата Хӗвелтухӑçне хирӗç тунӑ похода тепӗр хут тума хатӗр тӑракан, Германирен вил тӑприсемпе ишӗлчӗк туса хӑварма хатӗр тӑракан çынсем власра пулмалла. Анӑ мӗн тӑвасшӑн çак государство деятелӗсем конференци сӗтелӗ хушшине ларса, анӑ мӗнле каласусем кирлӗ вӗсене! Çакӑн пек малтанлӑха кӑларса тӑратнӑ условисен тӑрӑх иртерме сӗнекен каласусем мир ӗçӗшӗн мӗнле те пулсан усаллӑ ӗç пулма пултарассӗ-и вара? Çак никӗс çинче Германи ыйтӑвне е тата ытти кирек мӗнле ыйтӑва мир интересӗсемшӗн татса пама пулать-и вара? Паллах, çук!

Докладчик Совет Союзӗнчи халӑхсем миршӗн кӗрешни çинче нумай чарӑнса тӑрать. Совет халӑхӗ тӗнчери лару-тӑру мӗнле аталанса пынине тимлӗн асӑрхаса тӑрать, вӑл çӗнӗ вӑрçа сирсе ярас, пӗтӗм тӗнчипе мир туса хурас тата ӑна тӗреклетес тесе хӑй мӗн тума пултарнине пурне те тӑвать.

— Совет правительстви халӑхсем хушшинче мирлӗ çыхӑнусем тӑвассишӗн, халӑхсене пӗр-пӗрине çывхартассишӗн, туслӑ, культурӑллӑ, экономикӑлла, наукӑлла çыхӑнусем [illegible] аталантарассишӗн çирӗппӗн тытса пыракан мирлӗ политикӑна, мӗнпур çӗршывсен — пысӑк çӗршывсемпе пӗчӗк çӗршывсен — нацинкама пӑхӑнманлӑхӗпе суверенитетне хисеплекен политикӑна ют территорисене [illegible] ратман политикӑна — çавнашкал мирлӗ политикӑна [illegible] лесçӗ тата юратаççӗ, — тет Н. С. Тихонов.

Совет Союзӗ мире юратнине унӑн шалти политики [illegible] пӗрмай лайӑхланса пыракан [illegible] тытса пыракан политика уççӑн кӑтартса парать. Пирӗн çӗршыври ӗçсыннисен пурнӑçне лайӑхрах та лайӑхрах тӑвасси — çакӑн пек ӗнтӗ ку политикӑн тӗллевӗ. Çав политика вӑл чинӗ кеш енчи тӳрӗ шухӑшлӑ кашни çыншӑн, Совет Союзӗ çирӗппӗн те шанчӑклӑн мир политики тытса пынине лайӑх ӑнланать.

Совет правительстви тытса пыракан тулашри политикӑна совет çыннисем пӗтӗмпех ырласа йышӑнассӗ, мӗншӗн тесен çак политика вӑл паянхи тӗнчери лару-тӑрури кирек мӗнле тавлашуллӑ е татса паман ыйтӑва те интересленекен çӗршывсем пӗр-пӗрине калаçса татӑлнӑ никӗс çинче татса пама пулнине çирӗппӗн шанса тӑни çинче никӗсленсе тӑрать.

Совет халӑхӗ Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн решенийӗсене чӗререн ырлать, мӗншӗн тесен çак решенисем государствӑсем хушшинчи мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа йӗркелесе яма хушасçӗ. Эпир, совет çыннисем, вӑйпа хӑратмалли политикӑна тӳсейми сивлетпӗр. Эпир мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа йӗркелессишӗн тӑратпӑр.

Эпир тӗнче политикин мӗнпур ыйтӑвӗсем тӑрӑх интересленекен çӗршывсем хушшинче тӳрӗ кӑмӑлпа тата уççӑн каласусем, халӑхсем хушшинче çирӗп мир туса хума май паракан каласусем иртерессишӗн тӑратпӑр. Хальхи вӑхӑтра пӗтӗм тӗнчери халӑхсем çакӑн пек каласусене тӗллӗхрен, Корея ыйтӑвӗ тӑрӑх пуçласа ярасшӑн.

Совет халӑхӗ, ытти мӗнпур халӑхсем пекех, Корея пӗрлӗхлӗ, ирӗклӗ, мирлӗ государство пулса тӑтӑр тесе, Корея халӑхӗ хӑйӗн государство йӗрки çинчен, хӑйӗн экономикӑпа культура аталанӑвӗ çинчен тӑракан ыйтусене хӑй ирӗккӗн татса патӑр тесе тӑрать. Сакна ӑна Ли Сын Манӑн деспотла режимӗ, пусмӑрпа сарату режимӗ, хӑйӗн çӗршывне иртнӗ ӗмӗрсенчи чурралӑх самани патне тӗксе пыракан режим тытӑнса тӑнӑ чухне тума çук. Çавӑнпа та Корея ыйтӑвӗ тӑрӑх иртерме хатӗрленекен политикӑлла конференци ӗçне Ли Сын Ман диктатне пӑхӑнтарма шутлакан çынсем Корея ыйтӑвне мирлӗ майпа татса парасси çинчен шухӑшламассӗ те пулмалла. Эпир, совет çыннисем, США делегацийӗ ООН Генеральнӑй ассамблейин сессийӗнче тытса пынӑ политикӑна, мир ӗçӗшӗн çавнашкал хӑрушӑ политикӑна татӑклӑн сивлемесӗр тӑма пултараймастпӑр.

Совет халӑхӗ тӗнчери пысӑк ыйтусене сӳтсе янӑ чухне Китай пек аслӑ державӑна шута хумасӑр тӑракан политикӑпа та килӗшме пултараймасть. Вӑл США правительстви тата унӑн влиянинче тӑракан государствӑсен правительствисем Китай Халӑх Республикин Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗнчи прависене хисеплемелле тӑвассине хирӗç тӑнине йӗркеллӗ ӗç тесе йышӑнма пултараймасть. Çавнашкал политика мир ӗçӗшӗн усаллӑ ӗçсен патне илсе пыма пултараймасть.

Совет çыннисем тӗнчери реакцин каварне хирӗç тӑрассӗ. Тӗнчери реакци, Аденауэр ушкӑнӗпе кавар туса, Хӗвеланӑç Германирен Америка монополисчӗсен колонийӗ туса хума, нимӗç империализмне тепӗр хут ура çине тӑратма, нимӗç халӑхне [illegible] кӗртсе [illegible] умне кӑларса тӑратма шут тытнӑ.

Совет правительстви [illegible] августра [illegible] Германи ыйтӑвне мирлӗ йӗркелес ыйту çинчен Франци, Англи, США правительствисене [illegible] лӑхӗ пӗр шухӑшлӑ пулса ырлать.

Демократиллӗ Германи Республикине [illegible] иртернӗ каласусем результачӗсене совет çыннисем чӗререн ырласçӗ. Çак каласусем вӗсен [illegible] пысӑк ӗç, пӗтӗм тӗнчери мир интересӗсемшӗн совет халӑхӗпе Германи халӑхӗ хушшинчи [illegible] çинче паха тапхӑр пулса тӑрассӗ. Çак каласусем пынӑ вӑхӑтра Совет Правительстви Германи ыйтӑвне тӗрӗслӗхлӗ татса парас, хӑвӑртрах мирлӗ договор тӑвас, демократиллӗ [illegible] мирлӗ никӗс çинче Германи пӗрлӗхне тӑвас тӗлӗшпе çирӗп тӑнине кӑтартса пачӗ.

Докладчик çакна палӑртать: Совет Правительстви, пӗтӗм совет халӑхӗн ирӗкне палӑртса, Демократиллӗ Германи Республикине вӑрçӑ хысçӑнхи йыврӑхла пӗтерес тата Германи халӑхӗн пурнӑçне лайӑхлатас тӗлӗшпе материальнӑй пысӑк пулӑшу пачӗ. Çаксем пурте вӗсем Германие аслӑ держава туса хума пулӑшассӗ, Германи халӑхӗ валли нацилле пӗрлӗх тумалли, демократиллӗ Германи туса хумалли çула уçса парассӗ.

— Çапла çав, совет çыннисем Германи демократиллӗ тата пӗрлешӳ çӗршыв пулса тӑнине курасшӑн, Германи тепех гитлеризм тепӗр хут ураланакан çӗршыв, Америка колонийӗ пулса ют çӗршывсем хушшине юн юхтаракан çӗршыв пулмалла мар.

Совет халӑхӗ çавӑн пекех Австри ирӗклӗ те мире юратакан çӗршыв пулнине курасшӑн, Япони демократиллӗ те мирлӗ çӗршыв пулса тӑнине курасшӑн. Вӑл пусмӑрçӑсенчен ирӗк, мӗнпур çӗршывсемпе мирлӗ пурӑнакан çӗршыв пултӑр.

Совет халӑхӗ мӗнпур халӑхсемпе мирлӗн пурӑнасшӑн, мӗншӗн тесен Совет Союзӗ нихӑш государство территорине те хапсӑнмасть. Совет халӑхӗ аслӑ Америка халӑхӗпе мирлӗ пурӑнасшӑн. Америка халӑхӗ те, мире юратакан ытти халӑхсем пекех, реакциллӗ ушкӑнсем вӑрçа майлӑ тӑнине пӑхмасӑр, ытти халӑхсемпе тӑшмалла е вӗсене кураймасӑр пурӑнмасть.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ каласусем иртернипе тӗнчери мӗнпур ыйтусене йӗркелесе ярассишӗн кӗрешӳве вӑйлатасси çинчен йышӑннӑ решение совет çыннисем вӑхӑтра йышӑннӑ решени тесе шутласçӗ, вӗсем ӑна практикӑлла ӗçпе активлӑ пулӑшса тӑрассӗ.

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗ, — тет Н. С. Тихонов, — çакна шанса тӑрать: республикӑсенчи, облаçсенчи, крайсенчи мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комитетсем хӑйсен анлӑ пленумӗсенче, ырӑнти обществӑлла организацисен представителӗсемпе пӗрле, Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн решенийӗсенчен тухса тӑракан хӑйсен задачисене сӳтсе явӗç, çак решенисем çинчен кашни предприятире, колхозра, учреждениере, шкулта ӗçсыннисен пухӑвӗсенче сӳтсе явмалла тӑвӗç.

Пӗтӗм тӗнчери халӑхсем, тет юлашкинчен докладчик, Совет Союзӗ çине, мире юратакан пирӗн держава çине, вӑрçа сирсе ямалли тата мира сыхласа тӑмалли политикӑна çирӗп тытса пыракан çӗршыв çине пӑхассӗ. Совет халӑхӗ хӑйӗн пайӗсене шанса тӑрать.

Вӑрçӑ вӑйӗсен калла чакмалла. Пӗтӗм тӗнчере мирлӗ каласусем иртерес шухӑш çӗнтертӗр!

* * *

Прениссем вӗçленнӗ хыççӑн, пленум Н. С. Тихонов докладӗ тӑрӑх пӗр шухӑшлӑ пулса резолюци йышӑннӑ, кӑçалхи декабрь уйӑхӗнче миршӗн тӑракансен Пӗтӗм Союзри пиллӗкмӗш конференцине пухма постановлени йышӑннӑ. (ТАСС).

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗн пленумӗ йышӑннӑ РЕЗОЛЮЦИ

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗн ӗçӗсем çинчен Н. С. Тихонов докладне итлесе сӳтсе явнӑ хыççӑн, Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗн пленумӗ облаçсенчи, крайсенчи, республикӑсенчи мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комитетсен тата ССР Союзӗнчи обществӑлла организацисен представителӗсемпе пӗрле, тӗнчери халӑхсем тӗнчери хӑрушсӑрлӑха сыхласа хӑварассишӗн кӗрешсе тунӑ çитӗнӳсене кӑмӑлласа палӑртать.

Ырӑ кӑмӑллӑ мӗнпур çынсем Корейӑра перемири тунине пысӑк савӑнӑçпа йышӑнчӗç. Çак перемири вӑл Корейӑпа Китай халӑхӗсен тата мирпе демократи пӗтӗм лагерӗн пысӑк çӗнтерӗвӗ пулать.

Пӗтӗм тӗнчери миршӗн тӑракансемпе пӗрле миршӗн ывӑнма пӗлмесӗрӗн çирӗплӗх кӗрешекен совет халӑхӗ çак çӗнтерӳрен тӗнчери ытти мӗнпур ыйтусене те мирлӗн татса пама май пуррине курать.

Вӑрçӑ чӗртекенсем Берлинра туса иртернӗ провокациллӗ авантюрӑна пӗтерни те çавӑн пекех миршӗн тӑракансен пысӑк çӗнтерӗвӗ пулса тӑрать. Вӗсем пӗрлӗхлӗ, демократиллӗ, мире юратакан Германи Европӑра тата пӗтӗм тӗнчере мир ӗçне сыхласа тӑма мирлӗ паха условисене пулнине курассӗ. Совет правительстви Германи ыйтӑвӗ тӗлӗшпе, Австрие мирлӗ договор тумалли ыйту тӑрӑх, Корея ыйтӑвне татса памалли ыйту тӑрӑх, хӗçпӑшалсене чакармалли тата атомлӑ хӗçпӑшала, халӑха массӑллӑн пӗтермелли ытти йышши хӗçпӑшалсене усӑ курма чарса лартмалли ыйту тӑрӑх панӑ ӳсӗмсем тӗнчери мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене каласусем иртернипе мирлӗн татса памалли никӗс пулса тӑрассӗ. Çавӑнпа та вӗсем мире юратакан халӑхсен тӗп интересӗсене тивӗçтерессӗ.

Çавӑнпа пӗрлех пӗтӗм тӗнчери халӑхсем вӑрçӑ чӗртекенсен çӗнӗ провокацийӗсене асӑрхамасӑр иртсе кайма пултараймассӗ. США-ри тата империализмлӑ ытти çӗршывсенчи агрессиллӗ ушкӑнсем халӑхсен сыхлӑхне вайсӑрлатма тӑрӑшассӗ. Çӑмахпа вӗсем миршӗн тӑнӑ пек калассӗ, анчах ӗçре агрессиллӗ Çурçӗр Атлантика блокне аслӑлатса пырассӗ, тӗнчен мӗнпур пайӗсенче çӗнӗ çар базисем тӑвассӗ, хӗçпӑшалланассине вӑйлатассӗ, «сивӗ вӑрçӑ» политикине, Совет Союзӗпе халӑх демократи çӗршывӗсене хирӗç провокацисем тӑвас политика тытса пырассӗ. Агрессорсем тӗнчери ыйтусене интересленекен çӗршывсен пӗр-пӗринпе килӗшсе татӑлнӑ тӑрӑх йӗркелес политикӑна хирӗç тӑрассӗ. Тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗн татса пама чарас тӗллевпе ӗнтӗ, уйрӑммӑн илсен, висӗ державӑн ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗсен Вашингтонри канашлӑвӗнче решенисем йышӑннӑ, çавӑн пекех тата США-ри реакциллӗ ушкӑнсем Ли Сын Ман шайккине Корейӑри перемирие пӗтерсе лартма хӗтӗртессӗ.

Çакӑн пек условисенче мӗнпур çӗршывсенчи миршӗн тӑракан çынсен хӑйсен сыхлӑхне ӳстермелле. Мӗнпур халӑхсен тивӗçӗ вӑл мире хӳтӗлес тӗлӗшпе хӑйсен ӗçне вӑйлатасси пулать.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештра пулса иртнӗ сессийӗ йышӑннӑ решенире тӗнчери мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене каласусем иртернипе мирлӗн татса памалли никӗс пулса тӑрассӗ. Çавӑнпа та вӗсем мире юратакан халӑхсен тӗп интересӗсене тивӗçтерессӗ.

Çак никӗс çинче мӗнпур ырӑ кӑмӑллӑ çынсене государствӑсем хушшинчи тавлашуллӑ ыйтусене каласусем иртернипе мирлӗн татса парассишӗн пӗтӗм тӗнчери кампание анлӑн сарса яма, мире хӳтӗлессишӗн активлӑ ӗçлесе агрессиллӗ вӑйсен планӗсене аркантарса яма чӗнессӗ, мӗншӗн тесен агрессиллӗ вӑйсен планӗсем килӗшӳсем тума чӑрмантарса тӑрассӗ.

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗ Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн решенийӗсене, государствӑсем хушшинчи мӗнпур хирӗçӳсене каласусем иртернипе татса пама чӗнекен решенисене пӗтӗмпех ырлани çинчен пӗлтерет.

Мӗнпур çӗршывсенчи миршӗн тӑракан миллионшар çынсем çапла шанса тӑрасçӗ: ырӑ шухӑш пулсан, тавлашуллӑ тата татса паман ыйтусене мирлӗн татса памалли çулсене тупма пулать, çапла вара нумай вӑхӑта пыракан çирӗп мир туса хума пулать. Çапла шанса тӑнине совет халӑхӗ пӗтӗмпех килӗшет.

Совет çыннисем Совет правительстви тытса пыракан тулашри мирлӗ политикӑна чӗререн ырлассӗ. Çак политика вӑл мире сыхласа хӑварма тата тӗреклетме пулӑшать, вӑл совет халӑхӗпе мӗнпур çӗршывсенчи мире юратакан халӑхсен тӗп интересӗсене тивӗçтерет.

Мӗнпур çӗршывсенчи миршӗн тӑракан çынсемпе пӗрле совет çыннисем Корея ыйтӑвне тӗрӗслӗхлӗ никӗс çинче хӑвӑртрах мирлӗн татса памалла тӑвассишӗн, Корея халӑхне хӑйӗн тытӑм йӗрки ыйтӑвне, çавӑн пекех çӗршывӑн экономикӑпа культура аталанӑвӗн ыйтӑвӗсене ирӗклӗн татса пама парассишӗн тӑрать.

Совет правительстви Германи ыйтӑвне мирлӗн татса парас ыйту тӑрӑх панӑ сӗнӳсене пӗтӗм совет халӑхӗ ырлать. Çав сӗнӳсем Германие сӗнӗрен аслӑ держава пулса тӑма пулӑшассӗ, Германи халӑхӗ валли унӑн нацилле пӗрлӗхне туса хума, мире юратакан демократиллӗ Германи туса хума çул уçса парассӗ. Хӑйӗн çӗршывне пӗрлӗхлӗ, мире юратакан, демократиллӗ государствӑна пӗрлештерессишӗн кӗрешекен Германи халӑхӗ вӑй хурса ӗçленине Совет халӑхӗ саламлать, ӑна çак çул çинче пур енӗпе те çитӗнӳсем тума ырӑ сунать.

Мӗнпур çӗршывсенчи миршӗн тӑракансемпе пӗрле совет çыннисем Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ умне халӑхсем умӗнчи хӑйӗн тивӗçне пурнӑçлама требовани лартассӗ. ООН-ӑн хӑйӗн Уставӗнче кӑтартса панӑ çул çине тепӗр хут тӑмалла, мӗнпур çӗршывсемпе нацисен суверенлӑ прависене хисеплесе никӗс çинче тӗнчери мӗнпур хирӗçӳсене мирлӗ майпа татса пама пулӑшмалла. Китая шута хурас мар политикӑна пӗтермелле, Китай Халӑх Республикин Пӗрлешнӗ Нацисен организацийӗнчи прависене хисеплемелле. Çакӑн пек условисенче кӑна мире тата халӑхсем хушшинчи хӑрушсӑрлӑха сыхласа хӑвармалли тата тӗреклетмелли ыйтусене тӗрӗс татса пама пулать.

Совет халӑхӗ пӗр-пӗрине мирлӗн килӗштерсе пурӑнассишӗн, халӑхсем хушшинчи экономикӑлла тата культурӑлла çыхӑнусене аталантарассишӗн тӑрать тата малашне те тӑрӗ. Совет правительстви шалти политики, совет халӑхӗн вӗçӗмсӗр ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене пур майсемпе те тивӗçтерекен политики пирӗн государство миршӗн тӑрӑшнине пуринчен те лайӑх кӑтартса парать, ӑна мӗнпур совет çыннисем чӗререн ырласа йышӑнассӗ.

Мир ӗçӗшӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешсе, совет çыннисем вӑрçӑ чӗртекенсем тӗлӗшӗнчен сыхлӑха ӳстерме кирлине, аслӑ Совет Союзӗн оборонине ывӑнма пӗлмесӗр тӗреклетме тата лайӑхлатма кирлине асра тытассӗ. Хӑйӗн кунçулхи пур йышши çар техники пур пулсан та, Совет халӑхӗ никама та хӑратман тата хӑратмасть, халӑхсене пек хӗçпӑшалсене чылай чакарасси çинчен, атомлӑ, бактериллӗ хӗçпӑшалсемпе тата çынсене массӑллӑн пӗтермелли ытти мӗнпур хӗçпӑшалсемпе усӑ курма чарасси çинчен хӑвӑртрах килӗшӳ тӑвассишӗн çирӗппӗн тӑрать.

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен Совет Комитечӗ çакна çирӗппӗн шанса тӑрать: Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ чӗнсе каланине мӗнпур совет çыннисем пӗтӗм чӗререн ырласа йышӑнӗç, тӗнчери ыйтусене мирлӗн татса парассишӗн пыракан юхӑма активлӑн хутшӑнса хӑйсем аланах миршӗн тӑнине пӗтӗм тӗнче умӗнче çӗнӗ вӑйпа кӑтартса парӗç, мир политикине çирӗп тытса пыракан Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тата та чӑмӑртанӗç.

Пӗтӗм тӗнчере мирлӗ каласусем иртерес шухӑш çӗнтертӗр!

Вӑрçӑ вӑйӗсен калла чакмалла!

ЧӐВАШ АССР-ӗнчи РАЙОНСЕМ [illegible] КӖРХИ [illegible] ПЛАНСЕНЕ СЕНТЯБРӖН 1-мӗшӗ ТЕЛНЕ МЕН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Мӗн пурӗ акнӑ	Кӗрхи çӗр [illegible] ас тунӑ
[illegible]	100	19
Кувакино	99	21
Елчӗк	98	18
Сӗнтӗрво	98	15
Чурачӑк	97	28
Элӗк	97	18
Шӑмӑршӑ	97	19
Октябрьски	97	14
Йӗпреç	96	14
Калинино	96	9
Канаш	96	9
Хӗрлӗ Чутай	96	28
Вӑрнар	96	20
Шупашкар	95	13
Сӗнтӗр	95	13
Советски	95	23
Куславкка	95	6
Муркаш	94	19
Ишлей	94	19
Вӑрмар	94	13
Комсомольски	94	16
Çӗрпӳ	94	10
Первомайски	94	13
Пӑрачкав	93	14
Тӑвай	93	1
Етӗрне	93	3
Шӑхасан	93	13
Красноармейски	93	20
Сӗнтӗрвӑрри	91	9
Улатӑр	91	18

Юлашки почтӑран

Хаçатри пӗр отчет пирки

Шӑхасан районӗнчи «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаçат августӑн 27-мӗшӗнче тухнӑ номерте КПСС райкомӗн X-мӗш пленумӗн ӗçӗсем çинчен отчет пичетленӗ. Отчет хаçатӑн 2-мӗш страницине пӗтӗмпе тенӗ пекех йышӑнать. Пленум районти «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаçат редакторӗн — В. Яковлев юлташӑн отчетне итлесе сӳтсе явнӑ.

КПСС райкомӗн пленумӗнче районти хаçат редакцийӗн ӗçӗсем çинчен сӳтсе явни усаллӑ, питех те кирлӗ ӗç. Вӑл чи малтанах районти парти организацийӗ хаçата пулӑшма, ӑна малалла лайӑхлатма тӑрӑшни çинчен калать. Çапла ӑнланнӑ та редактор отчечӗ тӑрӑх пленумра тухса каланӑ райком членӗсем. Вӗсем пурте хаçат редакцийӗн ситменлӗхӗсем çинчен каласа, çав ситменлӗхсене пӗтермелли майсем çинчен кӑтартса панӑ.

Анчах та «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаçат редакторӗ урӑхла ӑнланни курӑнать. КПСС райкомӗн пленумӗ çинчен пичетленӗ номерте, тӗрӗссипе каласан, пленумӗсӗсем çинчен мар, хаçат редакцийӗн отчетне пичетленӗ. Пленум çинчен пичетленӗ пӗтӗм материалӑн пилӗк пайӗнчен тӑватӑ пайӗ — редактор отчечӗ, пӗр пайӗ — отчет тӑрӑх тухса калакансен кӗскетнӗ сӑмахӗсем.

Чӑнах та, редактор отчетӗнче самокритика çук тесе никам та калаймӗ. Анчах та хаçат ситменлӗхӗсем çинчен пленумра тухса калакан юлташсен сӑмахӗсене ытларах пичетленӗ пулсан хаçатшӑн та, вулакансемшӗн те усаллӑрах пулнӑ пулӗччӗ.

Фабрика хӗле хатӗрленет

Çӗрпӳри пир-авӑр фабрики иртнӗ хӗле йывӑр условисенче ӗçлерӗ. Çуртсене вӑхӑтра юсаман тата топливо çителӗклӗ хатӗрлесе хуман пирки, хӗллехи уйӑхсенче производство планне тултарайман кунсем сахал мар пулнӑ.

Фабрика дирекцийӗпе пуçламӑш парторганизаци, иртнӗ çулхи ситменлӗхсемпе йӑнӑшсене шута илсе, кӑçал хамӑрӑн предприятие хӗллехи вӑхӑтра ӗçлеме тӗплӗн хатӗрлес задача лартрӗç.

Çурт-йӗрсене юсама çуркуннех тытӑнтӑмӑр. Фабрикӑн икӗ çурчӗ тата электростанци те хӗле хатӗр. Вӗсене лайӑх юсаса çитерни.

Çулталӑклӑх вутӑ тата висӗ уйӑхлӑх çӗр кӑмрӑк [illegible] çуллахи кунсенче фабрика умне турттарса хутӑмӑр. Чӗртавар запасӗ те çителӗклӗ.

Иртнӗ çуркунне пирӗн рабочисемпе мастерсен пӗр ушкӑнӗ çӗнӗ хватер çуртне пурӑнма куçрӗ. Матвеев юлташ ертсе пыракан платниксен бригади халӗ çӗнӗрен 3 хватерлӗ çурт туса пӗтерет, сентябрь уйӑхӗнче унта пурӑнма куçассӗ. Кунпа пӗрлех эпир кивӗ çуртсене те юсаса çитеретпӗр. Строительство валли материал çителӗклӗ.

Фабрика коллективӗ халӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсемпе хавхаланса, производство планне ирттерсе тултарас, совет çыннисем валли илемлӗ те паха пир-авӑр парас ӗмӗтпе хавхаланса ӗçлет.

Кунпа пӗрлех районти тата республикӑри организацисем умне тӑратмалли пысӑк ыйтусем те пур. Пирӗн фабрика чугун çулпа ярса паракан топливӑпа чӗртавара, тӗрлӗрен оборудование Çӗрпӳ станцийӗ урлӑ илсе тӑрать. Çӗрпӳ хулипе чугун çул станцийӗ хушши инçех мар, 8 километр çеç. Анчах хӗллехи вӑхӑтра юр тарӑн пулнипе ку çулпа тӑтӑшах çӳреме çук. Çула юртан тасатса тӑманни фабрикӑна çеç мар, районти ытти хуçалӑхпа суту-илӳ организацийӗсене те хӗллехи вӑхӑтра пысӑк чӑрмавсем кӳрет.

Кӑçал çак çула пӑхса тӑма Çӗрпӳри çул-йӗр участокне хушнӑ. Эпир Çул-йӗрпе автотранспорт хуçалӑх управленийӗнчен çак çул участокне хӗле хатӗрлеме халех тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнма, ун тӑрӑх çулталӑк тӑршшӗпех çӳремелле тума ыйтатпӑр.

П. ИВАНОВ,
фабрика директорӗ.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланчӗ

Хаваслӑх кунӗ

Шупашкарти арҫын ачасен 4-мӗш вӑтам шкулӗ умне ҫамрӑксем ирех пухӑнма пуҫларӗҫ. Вӗсем пурте уяв чухнехи пек тумланнӑ. Ку ҫамрӑксем—кӑҫал VII-мӗш тата Х-мӗш классенче вӗренекенсем. Шкула учительсем те пухӑнчӗҫ.

Вӑхӑт 8 сехет патне ҫывхарать. Вӗренекенсем умне учительсем тухнӑ. Ҫамрӑксем класӑн-класӑн ретӗн тӑрса тухаҫҫӗ. Шкул директорӗ А. М. Ижейкин юлташ ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа вӗренекенсемпе учительсене саламлать.

— Сире ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа саламлатӑп,—тет шкул директорӗ.—Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви пирӗн ҫӗршывра социализмла культурӑна аталантарма, ачасемпе ҫамрӑксене пурне те вӗрентме куллен тӑрӑшаҫҫӗ. Паян Совет Союзӗнче темиҫе миллион ача парттӑсем лушшине ларса вӗренме тытӑнать. Кӑҫал Шупашкар хулинчи шкулсенче 9.000 ача ытла вӗренмелле. Пирӗн шкулта 700 ача ытла вӗренет.

Малалла шкул директорӗ арҫын ачасен 4-мӗш вӑтам шкулӗ вӗренӳ ҫулне пуҫлама пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитни ҫинчен каласа парать. Вӗренекенсем валли учебниксем, тетрадьсем, хут-кӑрандаш ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Шкул суртне юсаттарнӑ.

Ижейкин юлташ ачасемпе ҫамрӑксене лайӑх вӗренме, учительсене хӑйсен ӗҫне ӑнӑҫлӑ туса пыма ырӑ сунать.

Шкулта вӗренекенсен ячӗпе Х-мӗш класри отличник Г. Суслин сӑмах тухса калать. Шкул ачисем ҫуллахи вӑхӑтра лайӑх канни, ӑнӑҫлӑ вӗренсе пыма вӑйхал пухни ҫинчен каласа, вӑл ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗнче пур ачасене те ҫирӗп те тӗплӗ пӗлӳ илессишӗн тӑрӑшма чӗнет.

— Коммунистсен партийӗпе Совет правительствине халӑх пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн, пур ачасене те вӗрентессишӗн тӑван атте пек тӑрӑшнӑшӑн вӗренекенсен ячӗпе тав тӑватӑп,—тет вӑл.—Пирӗншӗн партипе правительство тӑрӑшни ҫине ответлесе, эпир коммунизмӑн активлӑ строительсем пулма тӑрӑшса вӗренӗр!

Х-мӗшпе VII-мӗш классенче вӗренекенсем классене кӗреҫҫӗ. Занятисем пуҫланать.

Часах шкул умне пуҫламӑш классенче вӗренекенсем амӑшӗ-ашшӗсемпе пӗрле пухӑнаҫҫӗ. Кашни ача аллинче чечек ҫыххи. Мӗн чухлӗ чечек вӗсен аллинче! Кашни ачан сӑн-питӗнче хаваслӑх, ҫав вӑхӑтрах хитӗ хумханни палӑрать. Акӑ, ачасен пӗр ушкӑнӗ умӗнче шап-шурӑ ҫӳҫлӗ ватӑ учительница. Вӑл хӑй вӗрентекен III-мӗш класри ачасене ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илет. Кашни ачапа вӑл ҫулла мӗнле канни ҫинчен, вӗренме кӗнекесем туянни ҫинчен каласать. Вӑл—РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учительници А. В. Черпакова юлташ.

Кашни класри ачасем шкула кӗме йӗркеллӗ тӑрса тухаҫҫӗ. Ачасене тата вӗсене ӑсатма пынӑ амӑшӗ-ашшӗсене шкул директорӗ ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа салам калать, ачасене шкула, пӗр ҫиктермесӗр ҫӳреме, тимлӗн вӗренме чӗнет.

Тӑхӑр сехетре пуҫламӑш классенчи ачасем вӗренме тытӑнаҫҫӗ.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа шкулта стена хаҫачӗ кӑларнӑ. Унта Х-мӗш класра вӗренекенсем Г. Судакова В. Журавлев хӑйсем ҫулла туристсен лагерӗнче мӗнле канни ҫинчен, В. Тысячник — Ленинграда экскурсие кайсан мӗн курни, Г. Суслов—хӑй Мускавра мӗн курни-илтни ҫинчен каласа панӑ.

Вӗренӳ ҫулӗ йӗркеллӗ пуҫланчӗ.

Чӑвашсен государство педагогика институтӗнче ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ йӗркеллӗ пуҫланчӗ. Кӑҫал ҫӗнӗрен 400 ҫын вӗренме кӗнӗ. Вӗсем хамӑр республикӑри хуласемпе ялсенчен, кӳршӗллӗ республикӑсенчен, облаҫсенчен килнӗ ҫамрӑксем.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ (сулахайран сылтӑмалла): пӗрремӗш курса вӗренме кӗнӗ студенткӑсем М. Ичина (Ҫӗрпӳ хулинчен), Р. Семенова, Э. Поликарпова (Шупашкартан), Л. Семеновская, Ю. Ольгина (Горький облаҫӗнчен), И. Макарова (Етӗрне хулинчен).

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Пулас энергетиксем

Шупашкарти энергетика техникумӗ. Сакӑр сехет кӑна иртнӗ-ха. Анчах вӗҫсӗр уҫӑлса хупӑнма тытӑнчӗ. Пӗр сехет каярах пулнӑ шӑплӑха вӗренекенсен хаваслӑ сасси хуҫкатрӗ.

— Аран кӗтсе илтӗм сентябрӗн 1-мӗшне. Тунсӑхласа ҫитрӗм техникумшӑн,—тет вӗренӳ отличникӗ Николай Козлов.—Тин кӑна техникума вӗренме килнӗ пекчӗ. Акӑ паян эпӗ иккӗмӗш курсра вӗренме тытӑнатӑп.

Козлов техникума вӗренме Чкаловски районӗнчи Анат Туҫа ялӗнчен килнӗ. Вӑл хӑйӗн юлташӗсене ҫуллахи каникула мӗнле ирттерни ҫинчен, тырпул пухса кӗртес ӗҫе активлӑ хутшӑнни ҫинчен каласа парать.

Юрий Шеин Мари АССР-ӗнче пурӑнать. Вӑл мӗн пӗчӗкренпех техникӑна юратнӑ, электростанцисенче ӗҫлеме ӗмӗтленнӗ. Ҫак шухӑш-ӗмӗтпе ӗнтӗ вӑл иртнӗ ҫулта энергетика техникумне вӗренме кӗнӗ.

— Чи лайӑх вӗренекенсенчен пӗри вӑл. Лайӑх техник-теплотехник пулать унтан,—теҫҫӗ Шеин ҫинчен преподавательсем.

Вӗренӳ отличници Лариса Антонова та тем пекех телейлӗ. Вӑл пӗрремӗш ҫул техникума вӗренме килнӗ ҫамрӑксене техникумри йӗркесемпе паллаштарать.

— Стена хаҫачӗ ҫинче вуларӑр пулӗ: пирӗн ҫӗршывра энергетика техникумӗсем 8 шутланаҫҫӗ. Вӗсен шутне пирӗн техникум та кӗрет. Сире кунта вӗренме пур условисем те ҫителӗклӗ. Техникумра теплотехника, физика, хими кабинечӗсем, электротехника, электричество машинисен лабораторийӗсем пур. Занятисене опытлӑ преподавательсем ирттереҫҫӗ, — тет вӑл.

Техникума 170 ача вӗренме илмелле пулнӑ пулсан, 573 ҫын заявлени панӑ.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче техникумран 77 ҫын вӗренсе тухнӑ. Вӗсем халӗ Омск, Новосибирск, Ереван хулисенче, Полтава, Свердловск облаҫӗсенче тата ытти ҫӗрте те ӗҫлеҫҫӗ.

Тӑхӑр сехет ҫитес умӗн вӗренекенсем коридорта йӗркипе тӑрса тухрӗҫ. И. В. Афанасьев преподаватель вӗсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа саламларӗ, вӗренӳре ӳсӗмсем тума ырӑ сунчӗ.

Коридорта Совет Союзӗн Гимнӗн чуна ҫӗклентерекен кӗвви янӑрать. Вӗренекенсем вырӑнтан хускалмасӑр социализмла ҫӗршывӑн мухтавлӑ Гимнне итлеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра вӗсем партипе правительство ҫинчен, Тӑван ҫӗршыври телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ ҫинчен шухӑшлаҫҫӗ. Пурин те пӗр ӗмӗт: лайӑх вӗренсе Тӑван ҫӗршывшӑн усӑллӑ ҫынсем пуласси.

Электричество звонокӗ хӑрӑммӑн янӑрарӗ. Вӗренекенсем аудиторисене кӗрсе вырнаҫрӗҫ.

Математика преподавателӗ В. М. Михайлов I «Б» курсра алгебра урокӗ ирттерет. Опытлӑ преподаватель вӗренекенсене лӑпкӑн та васкамасӑр ҫӗнӗ материалпа паллаштарать. Аудиторире преподавателӗн уҫӑ сасси кӑна илтӗнсе тӑрать, сайра хутра перо чӗриклетни илтӗнет. Тимлӗн итлеҫҫӗ вӗренекенсем преподавателӗн сӑмахне. Ҫак ҫамрӑксем темиҫе ҫултан Тӑван ҫӗршывӑн тӗрлӗ облаҫӗсемпе хулисене ӗҫлеме саланӗҫ, вӗсем Совет государствин вӑй-хӑвачӗшӗн, ӗҫҫыннисен телейӗшӗн хӑйсен вӑй-халне хӗрхенмесӗр ӗҫлӗҫ.

А. ЖИРНОВ.

Ҫӗрпӳри шкулсемпе техникумсенче

Ҫӗрпӳри шкулсемпе техникумсенче икӗ пин ытла ҫын вӗренет, ҫулсерен ҫӗршер ҫамрӑк вӗренсе тухать.

Ялхуҫалӑх техникумӗ ҫирӗм икӗ ҫул хушшинче ялхуҫалӑх специалисчӗсем 800 ҫынна яхӑн вӗрентсе хатӗрленӗ. Кӑҫал кунтан 42 агроном тата техник-механиксем 16 ҫын вӗренсе тухнӑ. Вӗсем халӗ республикӑри тӗрлӗ районсенче, МТС-сенче ӗҫлеҫҫӗ. Педагогика училищинчен 37 учитель, 20 старши пионер вожатӑй тата шкул ҫулне ҫитмен ачасен учрежденийӗсенче ӗҫлеме 27 ҫын вӗренсе тухса ӗҫлеме кайнӑ. Ҫавӑн пекех библиотека техникумӗнчен, профтехшкултан темиҫе вуншар специалистсем вӗренсе тухнӑ.

Хуларри вӑтам шкулта кашни ҫул 800 ача ытла вӗренет.

Кӑҫал шкулсемпе техникумсене вӗренме ҫӗнӗрен 300 ҫынна яхӑн илнӗ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Вӗренӳ йӗркеллӗ пуҫланчӗ

Шупашкарти хӗрачасен 3-мӗш шкулӗ умне ӗнер ир-ирех хӗрачасем пустарӑнма тытӑнчӗҫ. Пурте вӗсем капӑр тумланнӑ, ӳҫӗсене тирпейлӗн тураса ҫивӗтленӗ, аллисенче тем пысӑкӑш чечек ҫыххисем. Занятисем пуҫланас умӗн вӗсем пурте шкул аякинчи ешӗл площадкӑна пустарӑннӑ. Пӗр енче—кӑҫал пӗрремӗш класа кӗрекен хӗрачасем. Вӗсем хӑйсен амӑшӗ-ашшӗсемпе пӗрле килнӗ.

Атӑл хӗрринчи урамран Галя Бакунина хӑпарать, вӑл хӑйӗн амӑшӗпе. Гальӑн йӑм хура сумки тум-тулли, унта унӑн кӗнекесемпе тетрадьсем, пенал пур. Хӑюсӑр хӑпарать вӑл ҫулӗ пусма тӑрӑх. Пӗр учительница ӑна ӑҫта иртсе тӑмаллине калать, Галя пек пӗчӗк хӗрачасем кунта хӑйсем пӗр ҫӗрте ушкӑнпа тӑраҫҫӗ. Акӑ унпа юнашар Лида Ерина тӑрать, Лида амӑшӗ столовӑйра ӗҫлет.

Ҫӗнӗ юлташсем! Пӗчӗк хӗрачасем пӗрне пӗри палласах каймаҫҫӗ-ха. Анчах паллашассин малашӗ—умри вунӑ ҫул, вунӑ класра вӗренмелле-ха. Ҫав хушӑра вӗсем ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ, пысӑк ҫынсем пулаҫҫӗ. Тахҫан ҫак шкулта вӗренмен-и вара чӑваш ачи-хӗрӗсем халӗ пысӑк чапа тухнӑ ҫынсем? Вӗсен хушшинче — Совет Союзӗн Геройӗ Сапожников, Мускаври энерготехнический институтран отлично вӗренсе тухнӑ инженер Алисса Гинцель халӗ вӑл Куйбышеври гидростанци тунӑ ҫӗрте ӗҫлет. Вӑтам шкултан ӑҫта вӗренсе тухакансенчен пӗри Нина Хрисанфовна Макарова Чӑваш республикинче пӗрремӗш ылтӑн медале илнӗ пулнӑ. Халӗ вӑл Шупашкарти государство пединститутӗнче студентсене нимӗҫ чӗлхипе хӑй вӗрентет. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра чапа тухнӑ А. Я. Черпакова та вӑрҫӑччен ҫак шкулта вӗренсе тухнӑ пулнӑ. Нумай ачасем вӗренсе тухнӑ ҫак шкултан, вӗсенчен нумайӑшӗ халӗ пысӑк ӗҫсем тӑваҫҫӗ, Мускаври, Ленинградри, Шупашкарти, Хусанти тата ытти хуласенчи аслӑ шкулсенче вӗренеҫҫӗ.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ майпа шкул директорӗ Вера Ивановна Козлова ачасемпе вӗрентекенсене пурне те саламлать. Вуникӗ ҫул хушши шкул директорӗнче ӗҫлет вӑл ҫаканта.

Тӑхӑр сехет тӗлнелле шкулӑн сарлака алӑкӗ уҫӑлать. Кӑҫал ун урати урлӑ чи малтан 10-мӗш класра вӗренекен Людмила Шукина ярса пусать. Людмила ӑста вӗренет. Ҫак шкултан вӑл ылтӑн медальпе вӗренсе тухма ӗмӗтленет.

Акӑ шкула чи пӗчӗккисем кӗреҫҫӗ. Пурӗ ҫитмӗлӗн вӗсем. Аллисенчи пысӑк чечек ҫыххисемпе пӗрле вӗсем хӑйсем те чечексем пекех курӑнаҫҫӗ, ӳҫӗсем ҫине вӗсем тӗрлӗ тӗслӗ пурҫӑн бантиксем ҫыхаҫыха янӑ, кӗписем—хӗмӑр, саппунӗсем шурӑ—питӗ чиперрӗн курӑнаҫҫӗ вӗсем.

...Пӗрремӗш «А» класс. Чи малти партӑра Валя Медведевӑпа Нина Филиппова юнашар лараҫҫӗ. Вӗсем иккӗшӗ те класа пурнинчен малтан кӗчӗҫ. Нинӑн амӑшӗ Надежда Ивановна тахҫан хӑй те ҫак шкулта вӗренсе тухнӑ, халӗ вӑл хӑйӗн пӗремӗш ачине вӗрентме кунта илсе килнӗ.

Пӗрремӗш класри ачасене ӑста учительсем вӗрентеҫҫӗ. Зинаида Александровна Александрова—РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учительници. Вӑл 27 ҫул хушши ачасене вӗрентет. Александра Александровна Рождественская та шкулта 25 ҫул вӗрентет. Пӗр хут та икӗ хут мар йышӑнаҫҫӗ вӗсем ҫамрӑк шкул ачисене, вӗрентме пуҫтараҫҫӗ вӗсем.

— Телейлӗ те сывлӑхлӑ пулӑр, ачасем,—тет Вера Ивановна.—Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви сире тӑрӑшса вӗренме пур майсем те пачӗҫ, ҫавсене чӗререн тав тума тивӗҫлӗ ҫынсем пулӑр.

Н. ИЛЬБЕКОВ.

СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерствинче

Совет Союзӗнче тухса тӑракан хаҫатсенче пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ, Совет Правительстви Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствине июлӗн 30-мӗшӗнче нота ярса панӑ. Нотӑра Америкӑн ҫар самолечӗ июлӗн 29-мӗшӗнче Владивосток хулинчен инҫетри мар вырӑнта СССР государство чиккине сӗмсӗррӗн пӑснӑ пирки протест панӑ.

Совет Союзӗнче тухса тӑракан хаҫатсенче ҫавӑн пекех тата США-н Мускаври посолӗ господин Ч. Болен Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви хушнипе СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерствине памятнӑй записка ярса пани ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Унта ҫапла ҫырнӑ: Америкӑн ҫар самолечӗ СССР государство чиккине пӑсман, Америка самолетне совет истребителӗсем Япони тинӗсӗ ҫинче яланхи йӗркепе вӗҫсе ҫӳренӗ чухне тапӑннӑ, тенӗ. Асӑннӑ памятнӑй записка пирки СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерстви августӑн 3-мӗшӗнче США-н Мускаври Посольствине нота панӑ, унта Совет Правительстви памятнӑй запискӑра каланӑ протеста, нимӗнле сӑлтавсӑр тунӑ протест вырӑнне хурса, сирсе янӑ, июлӗн 30-мӗшӗнче панӑ нотӑна тепӗр хут ҫирӗплетсе каланӑ.

Августӑн 5-мӗшӗнче США-н Мускаври Посольстви, США Правительстви хушнипе, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерствине ҫак ыйту пирки тепӗр хут нота ярса панӑ. Унта асӑннӑ памятнӑй запискӑра каланисене тепӗр хут каласа ҫырнӑ.

Августӑн 26-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министерстви США-н Мускаври Посольствине ҫакӑн пек нота ярса панӑ:

«США Правительствин кӑҫалхи августӑн 5-мӗшӗнчи ноти пирки Совет Правительстви Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствине ҫапла пӗлтерме кирлӗ тесе шутлать:

Америкӑн «Б-50» йышши ҫар самолечӗ июлӗн 29-мӗшӗнче СССР государство чиккине Владивосток районӗнче пӑснӑ пирки Совет Правительстви кӑҫалхи июлӗн 30-мӗшӗнче тата августӑн 3-мӗшӗнче панӑ нотӑсене хирӗҫ США Правительстви панӑ ответа ҫителӗклӗ тесе йышӑнма пултараймасть.

Совет Правительствин асӑннӑ нотисенче кӑтартса панӑччӗ ӗнтӗ, чикӗне пӑсакан Америка самолечӗпе тӗл пулнӑ совет самолечӗсен летчикӗсем кӑтартса панӑ тӑрӑх, ҫавӑн пекех ҫӗр ҫинчен сӑнаса тӑракан пунктсенчен илнӗ сведенисем тӑрӑх, Америкӑн тӑватӑ моторлӑ «Б-50» йышши бомбардировщикӗ июлӗн 29-мӗшӗнче вырӑнти вӑхӑтпа ирхине ултӑ сехет тӗлнелле (Владивостокри декретлӑ вӑхӑтпа ҫиччӗ сехет тӗлнелле) СССР государство чиккине малтан Гамов сӑмсахӗ районӗнче пӑснӑ, унтан Владивостокран инҫетре мар, Аскольд утравӗ патӗнче СССР территорийӗ ҫийӗнче вӗҫсе ҫӳренӗ. Америка самолетне вӑл СССР территорине кӗни ҫинчен кӑтартса йӑрас тата ӑна Совет Союзӗн сывлӑш территорийӗнчен тухса кайма хушас тӗллевпе ун патне совет истребителӗсем ҫывхарса пырсан, Америка бомбардировщикӗ вырӑнти вӑхӑтпа ирхине 6 сехет те 12 минутра вӗсене хирӗҫ пеме пуҫланӑ. Ҫавна пула совет самолечӗсенчен пӗрине чылаях сиенленӗ—фюзеляжа тата сулахай ҫунатне персе шӑтарнӑ, ҫавӑн пекех летчик кабинине пӑснӑ. Чикӗне пӑсакан Америка самолечӗ ҫакнашкал хӑтланнине кура, совет самолечӗсен ирӗксӗрех хирӗҫ пеме тытӑнмалла пулнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Америка самолечӗ тинӗс енне вӗҫсе кайнӑ. Чикӗне пӑсакан Америка самолечӗн малашнехи кун-ҫулӗ тӗлӗшпе совет влаҫӗсен аллинче нимӗнле сведенисем те ҫук.

США Правительстви августӑн 5-мӗшӗнче панӑ нотӑра каланинчен ҫакӑ курӑнать: вӑл Америкӑн «Б-50» йышши тӑватӑ моторлӑ бомбардировщикӗ июлӗн 29-мӗшӗнче вырӑнти вӑхӑтпа ирхине 6 сехет те 15 минутра совет истребителӗ ҫине пенине йышӑнать. Вӑхӑт тӗлӗшӗнчен илсен, ҫакӑ вӑл совет нотисенче асӑннипе пӗр вӑхӑт тӗлнелле пулать.

Анчах США Правительстви хӑйӗн нотинче Америка бомбардировщикӗ СССР государство чиккине пӑсман пек кӑтартма, совет истребителӗсем ӑна уҫӑ тинӗс тӗлӗнче вӗҫсе пынӑ чухне тапӑннӑ пек кӑтартма пӑхать. Ҫав вӑхӑтрах Совет Правительствин июлӗн 30-мӗшӗнчи тата августӑн 3-мӗшӗнчи нотисенче илсе кӑтартнӑ тата тӗрӗслесе пӑхнипе ҫирӗплетнӗ сведенисем Америкӑн «Б-50» йышши самолечӗ СССР чиккине пӑсман тесе тата совет истребителӗсем ӑна Япони тинӗсӗ тӗлӗнче тапӑннӑ тесе каланисене пӗтӗмпех сирсе пӑрахаҫҫӗ.

Америкӑн ҫар самолечӗ Совет государствин чиккине пӑснӑ факта тӗрӗс ҫирӗплетсе кӑтартнӑ май, Совет Правительстви США Правительствин нотинче каланӑ протеста, нимӗнле сӑлтавсӑр тунӑ протест вырӑнне хурса, сирсе ярать.

США Правительстви хӑйӗн нотинче ҫапла калать: июлӗн 29-мӗшӗнче вырӑнти вӑхӑтпа 17 сехет те 50 минутра (кӑнтӑрла 5 сехет те 50 минутра), урӑхла каласан, ҫак ӗҫ пулса иртнӗ хыҫҫӑн 12 сехете яхӑн вӑхӑт иртсен, Америка самолечӗсем шывра, координатсем 42 градус та 14 минут ҫурҫӗр широти, 132 градус та 59 минут хӗвелтухӑҫ долготи пулнӑ вырӑнта асӑннӑ «Б-50» йышши бомбардировщик экипажӗн членӗсен 3—4 ҫынтан тӑракан икӗ ушкӑнне асӑрханӑ, Япони тинӗсӗн ҫак районӗнче Совет Союзӗн «РТ» йышши суднисем 12 пулнӑ пулать, вӗсем вара, нотӑра каланӑ тӑрӑх, «катастрофа хыҫҫӑн сыв юлнӑ ытти ҫынсене шыраса ҫӳренӗ пулмалла» пек. Ҫакӑн пек калани вӑл чӑн ӗҫне нимӗн чухлӗ те ҫырӑнмасть, ку вӑл «Б-50» йышши бомбардировщик экипажӗн членӗсене, Америка нотинче каланӑ тӑрӑх, ҫапталӑк тӗтреллӗ вӑхӑтра тата тӗттӗм чухне шыранинчен тухса тӑнӑ пулмалла. Ҫапла ӗнтӗ, США Правительстви фактсене хирӗҫ ныраках информаци сӑлтав вырӑнне илсе кӑтартать.

Совет Союзӗн ӗҫе тӗплӗн пӗлекен влаҫӗсем тӗплӗн тӗрӗслесе тухни ҫакна кӑтартать: Япони тинӗсӗн нотӑра асӑннӑ районӗнче июлӗн 29-мӗшӗнче нимӗнле совет пӑрахучӗ те пулман. Совет пӑрахучӗ ку района тепӗр кунне кӑна, урӑхла каласан, июлӗн 30-мӗшӗнче, вырӑнти вӑхӑтпа ирхине виҫӗ сехет тӗлнелле пырса тухнӑ. Ку вӑл пулӑ тытакан 423-номерлӑ траулер пулнӑ, вӑл Америка нотинче асӑннӑ район урлӑ иртсе пынӑ тата пулӑ тытса ҫӳренӗ. Ҫак траулер патне, унӑн капитанӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑн икӗ миноносецӗ ҫывӑрса тухнӑ, миноносецсенчен пӗрин ҫинчен шыва антарнӑ катер ҫинче пулнӑ Америкӑпа Япони офицерӗсем траулер капитанӗнчен «Б-50» самолет пирки тата унӑн экипажӗ ҫинчен сведенисем пама ыйтнӑ. Анчах та, траулер команди тинӗсре нимӗнле самолет ванчӑкӗ те тата унӑн экипажӗн членӗсене те курман пирки, совет траулерӗн капитанӗ, паллах, ыйтнӑ сведенисене пама пултарайман.

США Правительствин нотинче совет влаҫӗсен «Б-50» йышши Америка самолечӗн экипаж членӗсем ҫинчен сведенисем ҫук-ши, тесе ыйтнӑ пирки Совет Правительстви ҫапла пӗлтерме кирлӗ тесе шутлать: тӗрӗслесе пӑхнӑ тӑрӑх, совет влаҫӗсен аллинче Америкӑн «Б-50» йышши бомбардировщикӗн экипажӗ ҫинчен нимӗнле сведенисем те ҫук.

Хӑйӗн июлӗн 30-мӗшӗнчи тата августӑн 3-мӗшӗнчи нотисене ҫирӗплетсе, Совет Правительстви халӗ те совет чиккине пӑсмӑшӑн айӑплӑ пулнӑ ҫынсене ҫирӗп ответ тыттармалла тесе ҫинертӑрать тата Америка самолечӗсене малашне СССР государство чиккисене пӑсма чарас тӗлӗшпе США Правительстви мерӑсем йышӑнасса кӗтет».

Малта пыракан колхозсен ӗҫ опытӗнчен

Обществӑлла хуҫалӑха пур енӗпе те аталантарассишӗн

И. ВАСИЛЬЕВ,
Ҫӗрпӳ районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ

Ҫӗрпӳ районӗнчи ытти чылай колхозсенни пекех, пирӗн Хрущев ячӗпе тӑракан артелӗн те хӑйне ҫирӗплетсе панӑ ҫӗр лаптӑкӗ ытлашши пысӑк мар, мӗн пурӗ 800 гектартан иртмест. Ҫакӑн пек условисенче обществӑлла хуҫалӑх тупӑшне ӳстерес тесен, ҫӗрпе тӗрӗс усӑ курмалла, таварлӑ продукци паракан отраслӗсене вӑйлӑн аталантармалла.

Колхоз пӗрлешсе пысӑкланнӑ хыҫҫӑнах правленипе пуҫламӑш парторганизаци обществӑлла хуҫалӑхӑн тӗрлӗ отраслӗсене аталантарас тӗллев лартрӗҫ.

Анмалан ҫӗр нахалӑхӗ тӗлӗшӗнчен вырӑн колхоз ыттисенчен малта тӑрайрать. Мӗнпур ҫӗр лаптӑкӗнчен 80 процентӗ ҫинче—тӑмлӑ, кӗллӗ тӑпрасем. Ҫакӑн пек ҫӗрсем ҫинче тырпул тухӑҫӗ ӑнна ҫулсенче те гектар пуҫне 8—9 центнертан иртеймен.

Паллах ӗнтӗ, уй-хирсен тухӑҫне ӳстереймесен ытти отраслӗсене тӗреклетмелли никӗс те пулмасть. Ҫавна шута илсе, правленипе пуҫламӑш парторганизаци чи малтан ҫӗрӗҫ культурине хӑпартмалли мероприятисем палӑртрӗҫ. Ку ӗҫре пире государство кучуххехи хӑватлӑ техника, вӑрлӑхсем, удобренисем, укҫа-тенкӗ нумай парса пулӑшрӗ.

Халӗ пирӗн колхозра нумай ҫул ӳсекен курӑксен акӑнакан тӗрӗс пусӑ саврӑнӑшне пурнӑҫа кӗрсе ҫитрӗ. Кунсӑр пуҫне выльӑх апачӗсем акса тума ятарласа уйрӑм пусӑ саврӑнӑшӗ турӑмӑр. Ҫакӑн хыҫҫӑн колхозра тырпулсен тухӑҫне ӳстермелли, унпа пӗрлех выльӑх апачӗн пысӑк никӗсне тумалли анлӑ майсем пулса тӑчӗҫ.

Пусӑ ҫаврӑнӑшне йӗркелесе ҫитерни ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫне ӳстермелли задачӑна хӑй кӑна татса параймасть-ха. Ҫавӑнпа та эпир агротехникӑлла мероприятисен пӗтӗм комплексне пурнӑҫа кӗртессине тӗп вырӑна хуратпӑр. Вырӑнти тата минераллӑ удобренисемпе усӑ курасси виҫӗ ҫул хушшинче икӗ хут ытла ӳсрӗ. Кӑҫал ҫӗртме пуссинчи 80 гектар ҫине кашни гектар пуҫне 40-шер тонна ытла тислӗк кӑлартӑмӑр. Тӑпра нахалӑхна шута илсе, 55 гектар ҫине культиваци тӑвас умӗн фосфорит сӑнӑхӗ сапрӑмӑр, 148 гектар ҫинчи ыраш калчине халӗ, гектар пуҫне 3 центнер суперфосфат сапса, апат патӑмӑр.

Агротехникӑлла мероприятисен комплексне пурнӑҫа кӗртсе пынӑ май тӗштырӑсен, выльӑх апачӗ тума акакан культурӑсен тухӑҫлӑхне икӗ хута яхӑн ӳстертӗмӗр. Халӗ пирӗн тырпул ӑстисем пысӑк ҫӗр лаптӑкӗ ҫинчен гектар пуҫне 90—100 пӑт тырӑ туса илме вӗренсе ҫитрӗҫ. Анчах ку пӑл пирӗншӗн ҫителӗксӗр.

Малта пыракан уй-хир бригадисен опычӗ ҫакна кӑтартса парать: пирӗн тавралри колхозсен уй-хирӗсенче тырпул тухӑҫне гектар пуҫне 25 центнера ӑнӑҫлӑнах ҫитерме пулать. Халӗ пирӗн колхозниксем ҫак задачӑна пурнӑҫласишӗн хӑйне хурса ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн артель членӗсем выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ пулмалла тӑвассишӗн нумай ӗҫ турӗҫ. Сарансем тата выльӑх-чӗрлӗх ҫӳретмелли вырӑнсем пулманнипе колхоза пысӑк йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнӗччӗ. Пусӑ саврӑнӑшӗсенче выльӑх апачӗ валли акакан культурӑсен лаптӑкӗ ӳссе пыни пире ҫав йывӑрлӑхран тухма пулӑшрӗ.

Курӑксем акнӑ ҫӗр лаптӑкӗ 45 гектара, тымарсимӗҫсен—50 гектара ҫитрӗҫ. Унпа пӗрлех эпир ҫав культурӑсен тухӑҫне чылай ӳстертӗмӗр. Сӗтеклӗ апатсем тата концентратсем, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал икӗ хут нумайрах пулаҫҫӗ.

Симӗс конвейерпа усӑ курма тытӑнни пире ӗнесене ҫулталӑк тӑршшӗпех фермӑра тӑрантарасси ҫине куҫма май пачӗ. Май уйӑхӗнчен тытӑнса ӗнесене иртнӗ кӗркунне юри акса хӑварнӑ ыраш калчипе, унтан ҫӗртме пуссина акнӑ викӑпа, ятарласа акнӑ сӗлӗ калчипе тӑрантарса пытӑмӑр. Халӗ вӗсене сулса пухнӑ хыҫҫӑн ӳснӗ клевер кайӑвне сулса паратпӑр.

Силоспа тымарсимӗҫсем выльӑхсем валли чи лайӑх апат пулаҫҫӗ. Силослӑх культурӑсенчен пирӗн условисенче судан курӑкӗ пысӑк усӑллӑ пулни курӑнчӗ. Ӑна гектартан ҫӗршер центнер пухса илетпӗр тата ӑна выльӑхсем те юратса ҫиеҫҫӗ.

Выльӑх апачӗн никӗсне ҫирӗплетнӗ май выльӑх-чӗрлӗх шучӗпе тухӑҫлӑхӗ те ӳсет. Халӗ пирӗн фермӑсенче мӑйракаллӑ шултра выльӑхсем, планпа 100 пус вырӑнне—110 пус, сыснасем—150 вырӑнне—239 пус пурӑнаҫҫӗ. Ытти выльӑхсем ӗрчетес енӗпе те государство планне тултарнӑ.

1952 ҫулта пирӗн фермӑри сӑвакан кашни ӗне пуҫне 1.480 литр сӗт суса илнӗччӗ. Кӑҫал ӗнесен сӗт тухӑҫлӑхӗ 7 уйӑх ҫурӑ хушшинче кашнин пуҫне вӑтам шутпа 1.400 литра ҫитрӗ. Ҫӗнӗ ҫулччен 1.800 литра ҫитеретпӗр.

Эпир ӑратлӑ сыснасем ӗрчететпӗр. 1952 ҫултах колхозра акмалли ҫӗрӗн кашни 100 гектарӗ пуҫне чӗрӗ виҫепе 1.350 килограмм сысна ашӗ илнӗччӗ. Сысна фермин таварлӑ тухӑҫӗ кӑҫал тата пысӑкрах пулать.

Выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑш мӗнле ӳснине ҫак цифрӑсенче лайӑх куратпӑр. 1953 ҫулта пирӗн мӗнпур тупӑш 712 пин тенке ҫитет, вӑл шутран 410 пин тенкине, урӑхла каласан, 60 процентне яхӑн обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхрен илетпӗр.

Пирӗн условисенче халӗхи вӑхӑтра сысна ферми чи пысӑк тупӑшлӑ отраслӗ пулса тӑчӗ. Халӗччен пурӗ 105 пуҫ сыснана самӑртса сутрӑмӑр. Ку ферма кӑҫал хӑй кӑна 270 пин тенкӗ тупӑш парать.

Кунта эпӗ государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли задачисене мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен чарӑнса тӑмастӑп. Аш-какай памалли плана тахҫанах пурнӑҫланӑ, халӗ сӗт парса татнӑ хыҫҫӑн, ӑна потребкооперацине сутатпӑр, уншӑн пире автомашина параҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх валли витесем тӑвас ӗҫе пирӗн колхозниксем яланах пысӑк вырӑна хураҫҫӗ. Юлашки виҫӗ ҫул хушшинче строительство бригади фермӑсенче ҫӗнӗрен 8 типовӑй вите туса лартрӗ.

Халӗ ӗнтӗ фермӑсенчи йывӑр ӗҫсене механизацилес ыйту ҫивӗччӗн тухса тӑчӗ. Кӑҫал фермӑсене водопроводпа шыв кӗртмелле тӑватпӑр, ун валли 100 пин тенкӗ укҫа расходлатпӑр. Строительство ҫитес кунсенче вӗҫленсе ҫитет.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ыйтӑва татрӑмӑр тесе шутлани пысӑк йӑнӑш пулӗччӗ. Ӗнесемпе сурӑхсен тухӑҫлӑхӗ пире кирлӗ пек те тивӗҫтереймест-ха. Вӗсен ӑратлӑхне лайӑхлатмасан, эпир ку фермӑсенчен малашне те пысӑк тупӑш кӗтеймӗпӗр. Ҫавна май районта тата республикӑра ялхуҫалӑхпа хатӗрлев органӗсене те ӳпкелес килет.

Эпир хамӑр колхоз валли «Костромская» ӑратлӑ ӗнесем е пӑрусем туянас ыйтӑва тӑратрӑмӑр, анчах ӑна инҫета та усӑн татса пани пулмарӗ, ун пек ӑратлӑ ӗнесем кӳрсе килесси паллӑ мар имӗш.

Нумаях та пулмасть «Правда» хаҫатра Мускав облаҫӗнчи Луховицки районти Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗн Ф. Генералов юлташӑн статьи пичетленсе тухрӗ. Ку колхозра ӑратлӑ ӗнесен ферминче сӑвакан ӗнесен шутне 360 пуҫа ҫитернӗ, иртнӗ ҫулта кашнинчен вӑтам шутпа 4.500 литр сӗт суса илнӗ. Колхозӑн айккине сутмалли ӑратлӑ пӑрусем 300 пуҫ ытла пур мӗн, анчах туянакан ҫук.

Генералов юлташ ҫав пӑрусене вырнаҫтарма тӑрӑшманшӑн, хӑйсен районӗнчи госплемрассадник работникӗсене хытӑ ӳпкелет. Пирӗн хамӑр республикӑри тивӗҫлӗ органсене ыйту парас килет: 4—5 пин литр паракан ӑратлӑ ӗнесен пӑрушӗсене асӑннӑ госплемрассадник урлӑ пирӗн пата кӳрсе илме май ҫук-ши? Ӑратлӑ выльӑхсем кӳрсе илес тата вӗсене колхозсене сутас ӗҫе лайӑхлатма вӑхӑт ӗнтӗ.

Пирӗн колхозӑн тупӑшсемпе расходсен сметинче кантӑрпа хӑмларан илекен тупӑшсем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Малта пыракан колхозсен ҫитӗнӗвне шута илсе, эпир ҫак культурӑсен агротехникине лайӑхлатасси ҫине чылай вӑй хутӑмӑр.

Кантӑра вырӑнти удобренисемпе ҫемӗҫтернӗ, лайӑх хатӗрленӗ ҫӗр ҫине пурӗ 20 гектар акрӑмӑр. Калчана кашни гектар пуҫне 2,5 центнер аммиаклӑ селитра сапса апат патӑмӑр. Кантӑр пӗрри кашни гектартан 6 центнер, сӳсӗ 5,5 центнер тухасси курӑнать. Колхозницӑсем пусана вӑхӑтра татса шыва хутрӗҫ. Ҫак хаклӑ культура пире пӗтӗмпе 200 пин тенкӗ тупӑш памалла.

Хӑмла плантацийӗ 4 гектар ҫеҫ йышӑнать, анчах унӑн тупӑшӗ ҫулсерен ӳсет. Кӑҫал унтан 85 пин тенкӗ илетпӗр. Кунсӑр пуҫне пӗр гектар ҫинче ҫӗнӗрен хӑмла чӗртрӗмӗр, ҫитес икӗ ҫул хушшинче плантацие 7 гектара ҫитеретпӗр.

Обществӑлла хуҫалӑх аталанни, унӑн отраслӗсен таварлӑ тухӑҫӗ ӳснӗ май колхозниксен материаллӑ пурнӑҫӗпе культури те лайӑхланать. Иртнӗ ҫулта эпир кашни ӗҫкунӗ пуҫне 2,5 килограмм тырӑ тата выльӑх апачӗ валеҫнӗччӗ. Кӑҫал тырӑ, пахча-ҫимӗҫ, выльӑх апачӗ тата ытларах пама условисем пулса тӑчӗҫ, кунсӑр пуҫне тенкӗ ҫурӑ укҫа валесме палӑртрӑмӑр. Тырпул тухӑҫне, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх шучӗпе тухӑҫлӑхне ӳстермелли плансене ирттерсе тултарнӑшӑн нумай колхозниксем, ӗҫкунӗ сумне хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх, чылай тырӑ тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем илеҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗ пире хамӑр ӗҫри ӳсӗмсем ҫине критикӑллӑн пӑхма, хуҫалӑх экономикине тӗплӗнрех тӗпчесе пӗлме, производствӑна лайӑхлатмалли ҫӗнӗрен ҫӗнӗ резервсене тупса ӗҫе кӗртме вӗрентет.

Ун пек резервсем, обществӑлла тупӑша ӳстермелли ҫӑлкуҫсем пирӗн колхозра та сахал мар. Сӑмахран, 110 пуҫ ӗне выльӑхран сӑвакани 36 ҫеҫ. Вӗсен шутне икӗ хут ӳстерсен сӗт те икӗ хут нумайрах пулӗччӗ. Ҫакӑн ҫине эпир халиччен сахал пӑхнӑ. Пахча ҫимӗҫпе сайран илекен тупӑш ытла та ҫителӗксӗр.

Правленипе пуҫламӑш парторганизаци колхоз производствин пур отраслӗсенче те ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессипе, кадрсен ӗҫри квалификацине хӑпартасси ҫине тимлӗн пӑхмалла. Выльӑх апачӗ, техникӑлла культурӑсем акса тӑвас тата пухса кӗртес ӗҫсене эпир сахал механизациленӗ.

Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви социализмла ялхуҫалӑхӗ вӑйлӑн аталантарас, колхозсемпе колхозниксен экономикӑлла интересӗсене ӳстерес тӗлӗшпе йышӑннӑ мероприятисене пирӗн артель членӗсем пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илчӗҫ. Халӑх валли апат-ҫимӗҫ продукчӗсем, ҫӑмӑл промышленность валли чӗр тавар ытларах хатӗрлесе парассишӗн пирӗн колхоз планӗсем те хӑйсен майне кӗрмесӗр тӑрӑшӗҫ.

Демократиллĕ Вьетнам Республики сакăр çул тултарчĕ

Демократиллĕ Вьетнам Республикине туса хунăранпа паян сакăр çул тултарĕ. Вьетнам халăхĕ, Япони оккупанчĕсене хирĕç пĕттĕр вĕреçнсе, никама пăхăнмасăр пурăнакан пулнă. 1942 çулта, Япони Индо-Китая тапăнса кĕрессĕнех, çĕршывăн çурçĕр пайĕнче халăх захватчиксене хирĕç тăма пуçланă, унтан вара кĕрешӳ вăйтăралла сарăлса пынă. Захватчиксенчен ирĕке кăларнă районсем Вьетнам халăхĕн наци ирĕклĕхĕшĕн хăватлăн кĕрешмелли никĕсĕ пулса тăнă.

Японин çăткăн империализмне аркатса тăкас ĕçре Совет Çарĕ тĕп вырăн йышăнчĕ. Çакă вара Вьетнам халăхне никама пăхăнмасăр пурăнмалла пулма май пачĕ. Совет Союзĕн мухтавлă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Ĕçсыннисен партийĕ ертсе пынипе, Вьетнам халăхĕ 1945 çулхи август уйăхĕнче Япони захватчикĕсене тата вĕсене пулăшакансене хирĕç хĕçпăшаллă восстани пуçларĕ. Августра пулса иртнĕ халăх революцийĕ çĕнтерчĕ, 1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче Вьетнамра ылтăн çăлтăрлă хĕрлĕ ялав мăнаçлăн вĕлкĕшме пуçларĕ. Ку вăл — Демократиллĕ республика ялавĕ. Çав республикăна халиччен Франци колонийĕсем пулнă Аннам, Тонкин тата Кохинхина кĕчĕç.

Колониалле чуралăха пĕтернĕ хыççăн Вьетнам халăхĕ питĕ пысăк çĕкленӳпе демократилле çĕнĕ государство тума тытăнчĕ. Анчах та тĕнчери реакци çамрăк республикăна пĕтерсе хума шут тытрĕ. Вашингтон пулăшса тăнипе Франци империалисчĕсем демократилле Вьетнама хирĕç агрессилле вăрçă пуçарчĕç, ăна каллех хăйсен колонийĕ туса хурас тесе тăрăшма пуçларĕç.

Демократиллĕ Вьетнам Республики сакăр çул пурăнчĕ. Çав вăхăт Вьетнам халăхĕ алла хĕçпăшал тытса империализм çăткăнĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ вăхăт пулса тăрать. Кĕрешӳре Вьетнам халăхĕ хăйĕн демократилле çĕнтерĕвĕсене сыхласа хăварчĕ, Франци империалисчĕсене вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен аркатса пăрахмаллах сапса çĕмĕрчĕ. Вăрçă пынă вăхăтра республикăн хĕçпăшаллă вăйĕсем ӳссе тĕрекленчĕç. Халĕ ĕнтĕ Вьетнам Халăх çарĕ ăста çапăçма пултаракан регулярлă çар пулса тăрать, вăл хăйĕн çапăçăвĕсене тăшман тылĕнчи партизансен хăватлă юхăмĕпе тачă çыхăнтарса пырать.

Франци колонизаторĕсен Индо-Китайра çур миллион çар пур, вĕсен хĕçпăшал та, снаряжени те питĕ нумай. Апла пулин те вăрçăри пуçарулăха Вьетнам халăх çарĕ хăйĕн аллинче çирĕп тытса тăрать, вăл тăшман вăйĕсене пĕтĕмĕшпех хĕссе лартнă, захватчиксене хăватлăн пыра-пыра çапать. Франци колонизаторĕсене Вьетнамăн пысăк пайĕнче хăваласа кăларнă, çĕршыври 22 миллион çынран 20 миллион çынна чуралăхран ирĕке кăларнă. Колонизаторсем халĕ Кăнтăр-Китай тинĕсĕ хĕрринчи тата Трансиндокитай чугун çулĕ таврашĕнчи хуласене кăна тытса тăраççĕ.

... Эпир,—тесе çырнă пĕлтерех Франци буржуалла журнал «Аннэ политик э экономик»,—территорин виçĕ пĕчĕк таткине кăна тытса тăратпăр, вĕсене пур енчен те Вьетминăн вăйĕсем хупăрласа тăраççĕ (Демократиллĕ Вьетнам Республикине Франци колонизаторĕсем Вьетмин теççĕ). Анчах Вьетнам çĕрĕн çак «пĕчĕк таткисенче те», тесе çырнă журнал, захватчиксемшĕн пĕр канăç та çук. «Мĕн чухлĕ те пулин лăпкă район пачах çук,—тесе пĕлтернĕ журнал.—Пур çĕрте те партизансен вăрçи пырать».

Франци колонизаторĕсене кăçал халăх вăйлăн пырса çапнă. Вьетнам Халăх çарĕ январьпе февральте тăшманăн Ан-Хэ (Вăтаçĕр Вьетнам) секторĕнчи ултă пысăк гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă. Халăх çарĕсем хăватлăн хĕснине пула, французсем капрахна хытă çирĕплетнĕ Йен-Ви пунктран (Ханойран кăнтăртарахра) тухса кайнă. Малалла тапăнса пырса, Халăх çарĕ июньте Фуонг-Тру ятлă пункта (Ханойран 25 мильăра), июльте Ми-То районĕнче (Сайгонран кăнтăр-хĕвеланăçĕнче) тытах сакăр пункта ирĕке кăларнă.

Вьетнам халăхне хирĕç вăрçă вăрçма Франци колонизаторĕсем калама çук нумай укçа расходланă, ку тĕлĕшпе пĕтĕмпе виçĕ пин миллиард франк пĕтернĕ. Вĕсем çулсерен вуншар пин салтак, Франци мĕнпур çар училищисем вĕрентсе хатĕрлеме пултаринчен ытларах офицерсем çухатаççĕ. Индо-Китайри французсен командованийĕ хăйсен çарĕн позицийĕсене çирĕплетме пултараймасть (тĕрĕслесе тăракан районсен зонине сарас пирки халĕ сăмах та пымасть). Французсен экспедици корпусне, тесе çырать Америка журналĕ «Лайф», «блокгаузсене, тусенчи постсене хупса лартнă, вăл вырăнтан хускалманна пĕрех. Кăнтăрла вăл пĕр блокгауза тепĕр блокгаузпа çыхăнтарса тăракан çулсене сыхлать. Çĕрле Вьетнам патрулĕсем хуçа: вĕсем налогсем те пухаççĕ, французсен аллинчи хуласенче хăйсен çарне çынсем илсе тăраççĕ».

Индо-Китайри лару-тăрăва Франци колонизаторĕсем хăйсем те ырламаççĕ. Нумаях пулмасть: «Вьетнамăн шутлă кунсем кăна пурăнмалли юлнă» тесе кăшкăрнă ушкăнсем те халĕ автансем пек çуйăхма пăрахнă. Ку тĕлĕшпе французсен Индо-Китайри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Наварра генерал нумаях пулмасть каласа панине илсе кăтартни вырăнлă. «Эпĕ,—тенĕ генерал,—çакна йышăнма тивĕç: эпир икĕ çул хушши чакса пыратпăр ĕнтĕ. Вьетмин пĕрмаях малалла тапăнса пырать. Унăн боевой вăйĕсем хальхи пек нихçан та пысăк пулман...».

Хăйсем вăйсăррине ирĕксĕрех йышăнса, Франции ертсе пыракан ушкăнĕсем Индо-Китайри позицие Пĕрлешӳллĕ Штатсем пулăшнипе çирĕплетме тапăçланаççĕ. Америка хĕçпăшалĕ тата долларĕсем, Вьетнамăн «Халăх» ятлă хаçачĕ кăтартса панă пек, Вьетнамра французсен çар машини тытăнса тăмалли тĕревсем пулса тăраççĕ». Анчах та, «французсен çар машинине тĕрек парса тăрса», США империалисчĕсем унпа хăйсен агрессилле тĕллевĕсемшĕн ытларах та ытларах усă кураççĕ. Франци çарĕсен операцийĕсене чăннипе Америкăн çар миссийĕ пуçарса ертсе пырать. «Юнайтед стейтс стил корпорейшн», «Калтекс ойл», «Флорида фосфат» компанисем тата ытти Америка компанийĕсем халĕхе французсен аллинчи Индо-Китай районĕсен экономикинче хуçаланаççĕ. Тепĕр майлă каласан, тесе çырать французсен демократилле пичечĕ, Вьетнамри вăрçă ытларах та ытларах французсен аллипе вăрçакан Америка вăрçи пулса пырать».

Индо-Китайра юлашки вăхăтра Америкăн политика тата çар деятелĕсем сахал мар пулнă. Демократилле партирен президента суйланма кандидат пулнă Стивенсон хыççăн, США-н Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Кларк Сайгона пырса кайнă. Ун хыççăнах Америкăн Лăпкă океан районĕнчи çĕр çинчи вăйĕсен командующийĕ генерал-лейтенант О'Даниель пырса çитнĕ. Вьетнам информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çав «визитсен» пурин те пĕр тĕллев: Вьетнамри вăрçа тӳрремĕнех США-н контроллесе тăмалла, французсен тупă ашне Америка долларĕсемпе сутăн илмелле.

Индо-Китайри вăрçа малалла сарса пырас тĕлĕшпе Францие Америка вăрттăн килĕшӳ туни çинчен пĕлтерсе, французсен консервативла хаçачĕ «Монд» нумаях пулмасть çапла çырнă: «Долларсемшĕн Индо-Китая Франци салтакĕсене илсе каясси США-па пирĕн хушăри хальхи çыхăнусен никĕсĕ пулса тăрать,—ăна çăхлла ниепле те хак пама çук».

Франци колонизаторĕсем Индо-Китайра Вьетнамăн тата çĕршыври ытти районсен пуканелле «правительствисене» туса хунă. Вашингтон Америка влиянине çав «правительствăсем» урлă сарма тăрăшать. Кун пирки «Либерасьон» хаçат çырни питĕ вырăнлă: çак пуканелле «правительствăсем» Кăнтăр Корейăри Ли Сын Ман пекех Америка агенчĕсем шутланаççĕ.

Империалистсем ирĕк мĕнле маневрсем тăваççĕ пулин те, вĕсен Вьетнама туртса илмелли планĕсем шанчăксăр пулни уççăнах курăнать. Демократиллĕ Вьетнам Республикине пĕтĕм халăх вăйăлласа пулăшать, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешет. Çакăнта пулать те ĕнтĕ Демократилле республикăн вăйĕпе никам çĕнтереймен тĕревĕ. Наципе ирĕке кăларассишĕн пыракан юхăм вăйĕ халăхăн йышлă массисен хутшăнниччен килни пуриншĕн те паллă. Вьетнам ку тĕлĕшпе усăмлă тĕслĕх пулса тăрать. Пĕрлĕхлĕ Льен-Вьет наци фронтне миллионшар Вьетнам патриочĕсем — рабочисем, хресченсем, интеллигенци, вак буржуази пĕтĕçнĕ. Ку фронтăн ертсе пыракан вăйĕ—Вьетнамри Ĕçсыннисен партийĕ, унăн ретĕнче 790 пин член шутланать.

Демократиллĕ Вьетнам Республикин вăйĕпе тĕреклĕхĕн тепĕр çăлкуçĕ çĕршывра политикăлла тата экономикăлла пысăк улшăнусем туса иртерни пулать. Демократилле конституци йышăннă, влаçăн халăх органĕсене туса хунă, ĕç çинчен демократилле закон йышăннă, Франци колонизаторĕсенчен тата сутăнчăксенчен туртса илсе хресченсене çĕр валеçсе панă. Çаксем Вьетнам халăхне промышленноçа, ялхуçалăхне, культурăна аталантарас ĕçре чылай çитĕнӳсем тума пулăшнă.

Çамрăк республика строителĕсен малти ретĕнче рабочи класс пырать. Рабочисен ĕçри паттăрлăхĕ питĕ пысăк. Вăрçă чухнехи йывăр условисенче демократилле Вьетнам фронта кирлĕ япаласем татти-сыпписсĕр парса тăрать, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене лайăхрах та лайăхрах тивĕçтерет.

Халăх влаçĕ пулнăранпа Вьетнам ялĕ улшăнса çĕнелчĕ. Ĕçсыннисен партийĕ: «Пĕр вершук çĕр те ахаль ан выртр!» тесе чĕнсе каларĕ. Республикăри хресченсем çак чĕнӳ çине тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе патриотла анлă юхăм пуçарнипе ответлерĕç. Кăçал Вьетнам хресченĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем чылай турĕç. Вĕсем вăтам шутпа планпа палăртниччен 10 процент ытларах тырпул пухса кĕртрĕç. Выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк шучĕ чылай ӳсрĕ. Çапла вара, халăх çарĕ, республика ĕçсыннийĕсем апат-çимĕç ытларах илсе тăма пуçлаççĕ.

Республикăн культура ӳсĕмĕнчи çитĕнĕвĕсем те савăнтараççĕ. Франци колонизаторĕсем хуçаланнă вăхăтра Вьетнам халăхĕ 90 процент ытла хут пĕлмен. Хо Ши Мин ертсе пыракан демократилле Вьетнам правительстви ĕлĕкрен юлнă çав инкеке пĕтерчĕ. 14 миллион вьетнамец—халăхăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ—халăх влаçĕ пулнăранпа вулама тата çырма вĕренсе çитнĕ. Çĕршывра халĕ пурте хут пĕлекен провинцисем те сахал мар.

Вьетнамăн ирĕке кăларнă территорийĕнче пуçламăш шкулсенче вĕрентессине обязательнăй йĕркепе пурнăçласа пымалла тунă. Тăвата çул вĕренмелли шкулсем халĕ Вьетнамри кашни ялта тенĕ пекех пур. Çĕршывра пĕрремĕш университет уçнă, ытти аслă шкулсем чылай тунă, ялсенчи театрсем ĕçлессĕ, вуншар хаçатсем тата журналсем тухса тăраççĕ. Националле культура Вьетнамри анлă халăх массисен тивĕçĕ пулса тăнă.

Ирĕке юратакан Вьетнам халăхĕ хăйĕн демократилле республики сакăр çул тултарнине савăнăçлăн палăртать. Вăл çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварма яланах хатĕр тăрать. Вьетнам халăхне паттăр Корея халăхĕн тата мухтавлă Китай халăх добровольцĕсен аслă çĕнтерĕвĕ, мир лагерĕ Корейăри калаçусенче пысăк çитĕнӳ туни хавхалантарать. «Корейăра перемири тунă хыççăн Индо-Китайра та вăрçа чарса лартмалла»,—çак лозунг мĕнпур халăх чĕлхисемпе янăрать. Вьетнамра та мир тата телей туса хурас тĕлĕшпе халăхсен шухăш-кăмăлне кăтартса парать.

В. ХАРЬКОВ.

Демократиллĕ Германи Республикинче рабочисен, хресченсен, интеллигенци, халăхăн ытти сийĕсен пурнăçĕ лайăхланса пырать. Халăх тавар илме пултарни нумай ӳснĕ, кулленхи кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç ытларах туса кăлараççĕ, хуласемпе ялсенче çĕнĕ магазинсем уçаççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лангхаген ялĕнчи (Шверин округĕ) потребительсен обществин магазинĕнче пир-авăр илеççĕ.

ЦЕНТРАБИЛЬД фотоӳкерчĕкĕ.

Албанипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин виççĕмĕш съезчĕ

ТИРАНА, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Тиранăри халăх театрĕнче Албанипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин виççĕмĕш съезчĕ уçăлнă. Съезда 400 делегат пухăннă. Президиум сĕтелĕ хушшине Энвер Ходжа, Албанири ĕçлев партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕсем Мехмет Шеху, Хюсни Капо тата Гого Нуши, Совет Союзĕн посолĕ К. Д. Левычкин, Совет культурин деятелĕсен делегацийĕн пуçлăхĕ Вадим Кожевников писатель тата делегацин ытти членĕсем тухаççĕ. Вĕсене съезд делегачĕсем ăшшăн йышăнса илеççĕ.

Албанипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин ĕçĕсем çинчен тата малашнехи задачăсем çинчен общество председателĕ Бедри Спахиу доклад туса панă. Вăл обществăн иккĕмĕш съезд хыççăнхи виçĕ çул хушшинчи ĕçĕсем çинчен каласа панă. Отчетлă тапхăрта 43 пин пухусемпе митингсем иртернĕ, 9.750 выставка уçнă, 404 лекци пичетлесе 109.000 экземпляр, совет кĕнекисене 32 пин экземпляр салатнă. Вырăс чĕлхине вĕренме 181 кружок организациленĕ. Вĕсенчен 3,5 пин çын вĕренсе тухнă. Общество членĕсен шучĕ 120 пин çынтан 210 пин çынна çитнĕ.

Докладчик пĕлтернĕ тăрăх, Албанире сентябрь уйăхĕнче Албанипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ пулса иртет. Çак уйăхлăха Албанире кашни çул ирттереççĕ. Вăл Албанипе Совет халăхĕ хушшинчи туслăх уявĕ пулса тăнă.

Совет культурин деятелĕсен делегацийĕ ячĕпе съезда Вадим Кожевников писатель саламланă.

Корейăра перемири çинчен тунă килĕшĕве Америка енĕ çĕнĕрен пăснă

ПЕКИН, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Америка енĕ августăн 29-мĕшĕнче унăн çар персоналĕ перемири çинчен тунă килĕшĕве тата тепĕр хут пăсни çинчен пĕлтернĕ. Корейăпа Китай енĕ çак ĕçе пĕрле тĕрĕслесе тухма требовани лартнă.

Августăн 29-мĕшĕнче кăнтăрла 2 сехетре Ли Сын Ман çарĕн кĕçĕн лейтенанчĕ Мун Кюн Дук, Америка енĕн тата ытти тăвата çыннипе пĕрле транспортер çинче пыракансем, Канчжон сывăхĕнче хĕвелтухăçĕнчи çыран тăрăх пыракан демаркаци линийĕ урлă каçса Корейăпа Китай енĕн демилитаризаци зонине пырса кĕнĕ. Америка енĕн гражданск полицийĕ çакна курса тăнă пулсан та вĕсене тытса чарман.

Корейăпа Китай енĕн гражданск полицийĕ демаркаци линине пăсакансене вĕсем демаркаци линийĕ урлă каçса 400 метр ытла кĕрсен, тытса чарнă.

Граждански полицирен çакăн çинчен хыпар илнĕ хыççăн Ким Ту Хон тата Ли Ян полковниксем, сăнакансен хутăш 10-мĕш ушкăнĕнчи Корейăпа Китай членĕсем çак ĕç пулнă вырăна çийĕнчех пырса çитнĕ те ĕçе вырăнта тĕрĕсленĕ. Вĕсем хăйсем тĕрĕслесе пĕлни çинчен перемири тĕлĕшпе ĕçлекен çар комиссийĕсенчи Корейăпа Китай енĕн главнăй членне пĕлтернĕ.

Иранри лару-тăру пирки

ПАРИЖ, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран пĕлтернĕ тăрăх, министрсен совечĕн председателĕн канцелярийĕн чиновникĕ хаçат представителĕсене премьер-министр пулнă Мосаддык доктора çар судне парасси çинчен каласа панă. Чиновник çавăн пекех: малтан «çар юстицин аппаратне çĕнелле организацилемелле тата тасатмалла пулать», тесе пĕлтернĕ.

ТЕГЕРАН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Донья» хаçат çапла çырать: халăх партийĕн членĕсене арестлес ĕç малалла пырать, çак парти членĕсене кашни кун 100 çын таран Багершах тĕрмине ăсатса тăраççĕ. Хаçат çырнă тăрăх, августăн 29-мĕшĕччен çак парти членĕсене темиçе пин çын таран арестленĕ.

ЕГИПЕТПА ИЗРАИЛЬ ХУШШИНЧИ ДЕМАРКАЦИ ЛИНИЙĔ ПАТĔНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ ĔÇ

ЛОНДОН, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Байртан Египет çар влаçĕсем пĕлтернине парать. Унта çапла каланă: августăн 28-мĕшĕнче каçхине Израилĕн пулеметсемпе хĕçпăшалланнă отрячĕ Газа районĕнче Египетăн Палестинăри секторне пырса кĕнĕ те Аль-Бурсиг лагерĕнчи беженецсем çине пеме пуçланă. 15 çынна вĕлернĕ, 22 çынна амантнă.

Гватемалăри миршĕн тăракансен ĕçĕ

БУЭНОС-АЙРЕС, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Чилире тухса тăракан «Эль-Сигло» хаçат мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Гватемала комитечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ çинчен Гватемалăран илнĕ пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Сесси çакăн пек ыйтусем сӳтсе явнă: 1) Гватемала халăхĕсем пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварассишĕн тата хăйсен наци суверенитетне хӳтĕлессишĕн кĕрешни; 2) Корейăра перемири туни тата мирлĕ калаçусем иртерессишĕн анлă кампани сарас задачăсем.

Асăннă ыйтусене сӳтсе явнă хыççăн, миршĕн тăракансен комитечĕ деклараци йышăннă. Деклараципе, уйрăммăн илсен, çапла каланă: «Эпир çапла шутлатпăр: калаçусем иртерессишĕн пĕтĕм тĕнчипе анлă кампани иртерни, çав кампание Гватемала халăхĕ активлăн хутшăннипе иртерни, хальхи вăхăтра пыракан ытти вăрçăсене те чарса лартма, халăхсен суверенитечĕпе никама пăхăнманлăхне хисеплемелле тума пултарать. Калаçусем иртерме май пур. Çирĕп мир туса хума тата хăйĕн суверенитетне хӳтĕлеме пирĕн халăхăн калаçусем иртерессишĕн кĕрешес пулать».

Комитет çавăн пекех государствăсем хушшинче мирлĕ калаçусем иртерессишĕн, тĕнчери хирĕçӳсене татса парас ĕçре вăйпа усă курассине хирĕç кĕрешессишĕн алă пусмалли кампани пуçласа яма йышăннă.

Гватемалăри миршĕн тăракансем пиллĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвассишĕн чĕнсе калани çине 120 пин çынна ытла алă пустарнă ĕнтĕ.

Шахтерсен кунне уявлани

КУСЛАВКА, августăн 31-мĕшĕ. СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерствине пăхăнса тăракан çуртсем тăвакан заводăн коллективĕ Шахтерсен кунне производствăра пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. Завод 8 уйăхри плана срокчен тултарчĕ, августăн 26-мĕшĕнчен пуçласа сентябрьти план шучĕпе ĕçлет.

Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пысăк ушкăнне наградăсем панă. Вăл шутра: 13 çынна «СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерствин социализмла ăмăрту отличникĕ» значокпа, 13 çынна — министерствăн Мухтав грамотипе, 88 çынна — завод дирекцийĕн Хисеп грамотипе наградăланă. 33 стахановеца заводри Хисеп кĕнеки тата Хисеп хăми çине кĕртнĕ, 82 çынна завод дирекцийĕ тав тунă.

Уяв кунĕ умĕн заводра ĕçлекенсен 20 çемйи çĕнĕ çурта пурăнма куçрĕ. Пăравус машинисчĕ Софронов, Михайлова станочница, Малинин мастер, Казарин, Воробьев тата ытти рабочисем те лайăх хваттерсене куçрĕç.

Августăн 29-мĕшĕнче клубра Шахтерсен кунĕ ячĕпе завод коллективĕн чаплă пухăвĕ пулчĕ, ун хыççăн рабочисемпе служащисен пултарулăх кружокĕсем концерт пачĕç.

(Хамăр корр.).

Шахтер пулса ĕçлетпĕр

Эпир, Елчĕк тата Йĕпреç районĕнчи çамрăксем, иртнĕ çулта Кемерово облаçĕнчи Киселевск хулинчи ФЗО шкулĕнчен шахтерсем пулса вĕренсе тухрăмăр. Çакăн хыççăн пире Артем хули патĕнчи çĕр кăларакан шахтăна ĕçлеме ячĕç. Халĕ эпир совет шахтерĕсен хисеплĕ ретĕнче тăрăшса ĕçлетпĕр. Йĕпреç районĕнчи Выçли ялĕнчен килнĕ Н. Андреев, Туçа ялĕнчен килнĕ Н. Кузнецовпа А. Трифонов тата Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ялĕнчен килнĕ А. Львов, Тӳскел çамрăкĕ А. Смирнов тата ыттисем те сменăри задание ялан 140—150 процент таран тултарса пыраççĕ.

Пире кунта тухăçлă ĕçлеме тата лайăх канма пур условисем те çителĕклĕ. Ĕç укçи уйăхне пиншер тенкĕ ытла илетпĕр. Пушă вăхăта культурăллă та усăллă ирттеретпĕр. Час-часах кинора, театрта пулатпăр, библиотекăна çӳресе хамăр пĕлĕве ӳстеретпĕр. Эпир ытти çамрăксене те ФЗО шкулне вĕренме кайса шахтерсем пулма сĕнетпĕр.

И. НИКИТИН.

Приморье крайĕ.

Етĕрне районĕнче

★ **Колхозсенчи радиоузелсем.** Кăçал «1-ое Мая» колхозра радиоузел лартнă. 67 колхозник килне радио кĕртнĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра 400 точкăллă радиоузел тума тытăннă.

★ **Колхозсен автопаркĕ ӳсет.** Маленков ячĕпе тăракан колхозăн кăçалччен виçĕ автомашина пулнă. Сĕт парса колхоз нумай пулмасть çĕнĕ автомашина туянчĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозăн та 4 автомашина.

★ **Малтанхи авансем.** Буденный ячĕпе тăракан колхоз кашни ĕçкунĕ пуçне аванс шучĕпе 2,5 килограмм, Маленков ячĕпе тăракан колхоз 2 килограмм тырă валеçсе пачĕç. Колхозра тăрăшса ĕçлекен колхозниксем 60—80-шар пăт тырă илчĕç.

★ **Культура магазинĕнче.** Ĕçсыннисем культура япалисем нумай туянаççĕ. Кăçал культура магазинĕ 5 мотоцикл, 158 велосипед, 42 радиоприемник, музыка инструменчĕсем нумай сутнă.

★ **Çĕнĕ магазин тăваççĕ.** Чурпай ялповĕ Пырçирлан ялĕнче типовăй проект тăрăх ялти магазинăн çуртне туса пĕтерет.

★ **Çĕнĕ библиотекăсем.** Нумай пулмасть Мăн Йĕкĕтре ялти библиотека уçнă. Сывăх кунсенчех Пушнар ялĕнче те çĕнĕ библиотека уçаççĕ. Районти библиотека сумĕнче куçса çӳрекен библиотекăсем ĕçлеççĕ.

★ **Ĕçсыннисене кино кăтартасси вăйланать.** Уй-хирти ĕçсем пуçланнăранпа районта 20 кинофильм кăтартнă. Колхозсенче 90 киносеанс пулнă.

Марксизм-ленинизма вĕренмелли каçхи университетра вĕренекенсене пĕлсе тăма

КПСС Шупашкар хула комитечĕ çумĕнчи марксизм-ленинизма вĕренмелли каçхи университетăн пĕрремĕш тата иккĕмĕш курсĕсенче вĕренекенсене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: университетра занятисем сентябрĕн 3-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре пуçланаççĕ.

Пĕрремĕш курсра вĕренекенсем—Советсен çурчĕн Пысăк залĕнче, иккĕмĕш курсра вĕренекенсем КПСС хула комитечĕн библиотекинче вĕренеççĕ.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Критикăпа библиографи

Лайăх парне

Çак кунсенче Чăвашгосиздат Василий Алендейăн «Пирĕн кил» ятлă*) кĕнекине кăларчĕ. Унти сăвăсене ача-пăчасем валли çырнă. Кĕнекере пурĕ 25 сăвă. Çак кĕнеке вара В. Алендей лирикăлла сăвăсем çырас тĕлĕшпе кăна мар, ача-пăча сăввисем çырас тĕлĕшпе те ĕçленине кăтартса парать.

Пирĕн Тăван çĕршыв ача-пăчасемшĕн тăрăшать, вĕсене çирĕп те тĕреклĕ ӳстерме, лайăх вĕрентме пур условисем те туса панă. Коммунистсен партийĕ ачасене лайăх çитĕнтерес тесе пĕтĕм вăйне хурать.

Ачасене воспитани парса ӳстерес ĕçре тăван кил, тăван колхоз пысăк вырăн йышăнать. Хальхи культурăллă çемьере ачасем те культурăна хăнăхса ӳсеççĕ.

Кӳлĕ, шкул,
Сап-сутă сĕн çуртсем,
Хӳхĕм тулă, лăпкă ăшă çил,
Çамрăк сад,
Шап-шурă хурăнсем—
Çакă пĕтĕмпех вăл—пирĕн кил,—

тесе çырать автор «Пирĕн кил» сăвăра. Поэт кунта пирĕн Тăван çĕршыв ачасемшĕн чăн-чăнах ăшă кил пулни çинчен кăтартса парать. «Аслă парти ăшăтать пире»,— тесе вĕçлет поэт малтанхи сăвва.

«Пирĕн кил» — тематика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕтĕм шухăшлă, «пĕр шăнăрлă» кĕнеке. Автор шухăша сапаласа ямасть, ачасене пĕр йăпала çинчен, пĕр килти, пĕр колхозри ĕçсем çинчен сăнласа парать. Анчах та çав килти пĕчĕк ĕçсем урлă хамăрăн аслă Тăван çĕршывăмăрăн пысăк ĕçĕсем курăнаççĕ.

Кĕнекери сăвăсем пурте тенĕ пек сюжетлă сăвăсем. Автор «Эх ырă, эх аван», тесе кăшкăрмасть. Ĕçпе сăнласа, картина ӳкерсе кăтартса парать. Вулакан автора ĕненет.

В. Алендей ачасĕн чун-чĕрине лайăх уçса парать. Ун сăввисем яка, çăмăл вуланаççĕ. Акă, сăмахран, «Сехет» сăвва илер. Сăвва вуланă чухне сехет çапнă пекех туйăнать:

«Шăн выртса,
Сывăрса
Эс ан юл,—
Харсăр пул!
Хыт вĕрен,
Ус, сăклен.

Çак сăвва вуласа тухнă хыççăнах, пăхмасăр калама вĕренес килет. Вĕренме те çăмăл, виç-тăватă хут вула кăна...

Поэт ачасене ĕçе юратма вĕрентет. Ун çинчен «Харсăр Оля», «Задача» сăвăсем те аван кăтартса параççĕ. «Харсăр Оля» сăвăри хĕрача амăшĕ мĕн ĕç тăвать, çавна тума хăтланать. Анчах ĕç мелĕсене пĕлмест-ха вăл, урайне варринчен сĕрме пуçлать, картишне хапха енчен шăлма тытăнать. Амăшĕ ăна ĕçе вĕрентет. «Задача» сăвăра пĕр ача задачăн отвечĕ тухманнипе аптăрать. Анчах пурпĕрех çак задачăна хăй вăйĕпех шутласа кăларма тăрăшать, çине тăрать. Юлашкинчен шутласа кăларатех. Мĕнле савăнăç ку ачашăн!

«Ешĕл туратсем» сăвăра ачасем фермăри выльăхсем валли çулçăллă апат хатĕрлеççĕ. Автор ку ĕçе витĕмлĕн сăнласа парать.

Вĕстеретпĕр вăрмана:
«Тыт мана» та «тыт мана».
Çулçă йăтрăмăр нумай.
«Ман нумай» та
«Ман нумай», — тенĕ сăвăра.

Кунта ачасем ăмăртса чупнине, хавассăн калаçса тавраннине куратăн.

Автор, çавăн пекех, юлхав ачасене сивлет, вĕсене харсăр пулма чĕнет. Акă, сăмахран, «Вара, вара...» сăвва илер. Павăл шкулта вĕренет, учитель ачасене килте шутлама задача парса янă. Павăл ăна шутласшăн мар, «вара-вара...» тет. Малтан вылясса çӳрет, унтан темскер каскалать, вара кушака çухăртать. Кайран, ирĕнсе çитнĕскер, выртать те çывăрать.

«Çакăн хыççăн Павлана
«Иккĕ» паллă кап кăна
Лартнă панă. Мыскара,
Ак сана «вара, вара...»

Ачасен пурнăçĕнче ĕç кăна мар, вăййа та пысăк вырăн йышăнать. Ачасен вăййисем çинчен çырса парасси — ответлă та паха ĕç. В. Алендей ку енĕпе «Ăшă салам», «Кĕт кĕтес», «Ташă» сăвăсем çырнă. «Ăшă салам» сăвăра пĕр ача икĕ пукан лартать те «пăравус» тăвать. Çапла вара хăйĕн пиччĕшĕсем патне кайса курма шутлать. Пĕр пиччĕшĕ ун флотра, тепри чикĕре, пограничник, виççĕмĕшĕ — вĕçевçĕ, сывлăшра. Юлашкинчен вăл Мускав хулинче пулма шутлать, аслă столицăна салам каласчĕ, тет:

Аттерен,
Аннерен,
Хамăн ĕçчен аппаран,
Çарти виçĕ пиччерен,
Пĕчĕк, паттăр шăллăмран
Калаттăм ăна салам,
Чи пысăк ăшă салам.

Кĕнекере çитменлĕхсем пачах çук теме пулмасть. Хăшпĕр сăвăсене («Почтальон», «Тамаша», «Фотоӳкерчĕк») васкаса çырни сисĕнет. Хăшпĕр çĕрте якатса çитереймен вырăнсем те пур. Сăмахран: «Çав «Ру»-ра Хăстар ăру»,—тесе çырнă. Мĕн вăл «Ру»? Поэт уçса парайман.

Кĕнекене Г. Харлампьев художник аван иллюстрациленĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, «Пирĕн кил» кĕнеке ачасемшĕн лайăх парне.

Г. КРАСНОВ.

*) Василий Алендей. «Пирĕн кил». Чăвашгосиздат. 1953 ç. Тираж 5000 экз. Редакторĕ Ст. Павлов. Хакĕ 45 пус.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

КИНО

«РОДИНА»—сентябрĕн 2-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Спортивная честь», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче кинокомеди «Три товарища».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—2-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00494 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.